им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

1953 çул Август 18 ытларикун № 161 (9070)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Паянхи номерте:

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрсен кабинечĕн председателĕ Ким Ир Сен СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).
ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔПЕ КПСС ОБКОМĔНЧЕ. Республикăра кĕраки мĕнле пыни çинчен (1 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. А. Охотников.—Кадрсене тĕрĕс суйласа илмелле; Г. Андреев.—Ĕçри хастарлăх (2 стр.).
РАЙОНТИ ХАÇАТСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен анлăн çутатмалла (2 стр.).
П. Щипцов.—Хастарлă механизаторсем (3 стр.).
Корейăна Совет Çарĕ ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарни (4 стр.).
Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви йышăннă постановлени (4 стр.).
Тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссире Корейăпа Китай енĕн представителĕсем панă протест (4 стр.).
Иранри лару-тăру (4 стр.).

Ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ закон

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ пиллĕкмĕш сессийĕ ССР Союзĕн 1953 çулхи бюджетне çирĕплетрĕ тата ялхуçалăх налогĕ çинчен çĕнĕ закон йышăнчĕ. Верховнăй Совет йышăннă решенисене, сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха совет çыннисем пурте ырласа кĕтсе илчĕç.

Г. М. Маленков юлташ хăйĕн сăмахĕнче промышленноçа тата ялхуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене палăртса пачĕ. Партипе правительство ик-виçĕ çул хушшинчех халăх валли апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем нумай ытларах парса тăмалла тума задача лартнă. Çак задачăна пурнăçлама çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне вăйлатмалла, халăх валли апат-çимĕç, çăмăл промышленность валли чĕртавар парса тăракан ялхуçалăхне малалла çĕклентерсе пымалла. Партипе правительство çав задачăсене пурнăçлама мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пыраççĕ.

Вăл шутра ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă закон чылай паллă вырăн йышăнать. Çак закона йышăнни Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви хамăр çĕршывăн халăх хуçалăхне малалла вăйлатассишĕн, халăх пурнăçне малалла лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине кăтартать.

Ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ законăн тĕп уйрăмлăхĕ, чи малтан, çакă пулать: 1953 çулта налог укçи 43 процент чакать, çитес 1954 çулта вара, 1952 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут ытла чакать. Çапла ĕнтĕ ялхуçалăх налогĕ тÿлекен çынсен ку налога иртнĕ çулхинчен нумай сахалтарах тÿлемелле пулать.

Çĕнĕ закон тăрăх ялхуçалăх налогĕ хумалли йĕркене те тĕпренех улăштарнă.

Халиччен ялхуçалăх налогĕ хума колхозниксем тата ялти ытти çынсем те кил вырăнĕ çумĕнчи участокра мĕн акса тунине, килте мĕнле выльăх-чĕрлĕх усранине уйрăммăн шута илнĕ, вара çав тупăшăн пĕтĕм суммипчен шутласа налог хунă. Кун пек йĕрке налог политикинчи ситменлĕх пулнă, çавна пула юлашки çулсенче колхозниксем хăйсен хушма хуçалăхĕсенчен илекен тупăш чакнă, колхозниксен килĕсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ, уйрăмах ĕнесен шучĕ чакнă. Ялхуçалăх налогĕ шутласа хумалли çав кивĕ йĕркене халĕ ĕнтĕ пăрахăçа кăларнă.

Çĕнĕ закон тăрăх ялхуçалăх налогне кил çумĕнчи çĕр участокĕн пысăкăшне кура—гектарăн кашни çĕрĕмĕш пайĕ пуçне çирĕп ставка тăрăх шутласа хумалла тунă.

Ялхуçалăх налогĕ хумалли çак çĕнĕ йĕрке колхозниксене кил çумĕнчи участокра хаклăрах, усăллăрах культурăсем акса тума, ялхуçалăх артелĕн Уставĕ ирĕк панă чухлĕ выльăх-чĕрлĕх усраса усă курма интереслентерет. Çакă Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви колхоз строительствинче тытса пыракан политикăпа килĕшсе тăрать.

Паллă ĕнтĕ, обществăлла хуçалăх—колхозсен тĕп вăйĕ. Обществăлла хуçалăх вăйланса пынă май колхозниксен тупăшĕ ÿссе пырать, вĕсен пурнăçĕ лайăхланса пырать. Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви колхозсен обществăлла хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме колхозниксене пур майсемпе те хавхалантараççĕ. Кунпа пĕрлех партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви колхозниксем ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх тытакан хушма хуçалăхран—кил çумĕнчи участокрăн тата килте усракан выльăхсенчен ытларах усă курччăр тесе тăрăшаççĕ. Çавна май Правительство тата партин Центральнăй Комитечĕ колхозниксен хушма хуçалăхĕсенчен обязательство йĕркипе илмелли нормăна чылай чакарнă тата çĕнĕ закон тăрăх ялхуçалăх налогĕн суммине чакарнă, налог укçине çирĕп ставка тăрăх шутласа хумалла тунă.

Ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ закон тăрăх ĕне усраман хуçалăхсем çине налог хумалли суммăна 1953 çулта 50 процент тата 1954 çулта 30 процент чакараççĕ; 1955 çултан пуçласа çав хуçалăхсем çине налог ялан хи йĕркепе хураççĕ. Çакна колхозниксен, рабочисен тата служащисен çемйисене хăйсем валли ĕне туянма хавхалантарас тĕллевпе тунă.

Çĕнĕ закон колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетме, çапла вара колхозсен обществăлла хуçалăхне вăйлатас ĕçе мĕнпур колхозниксене хутшăнтарма пулăшать. «Колхозниксен хуçалăхĕсем, — тесе каланă ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ законра, — вĕсен çемйисен уйрăм членĕсем иртнĕ çул ĕçкунĕсен палăртса панă минимумне тивĕçлĕ сăлтавсăр тултарман пулсан, налог укçи 50 процент ытларах тÿлеççĕ». Налог укçине ытти колхозниксемпе пĕр танах тÿлес мар тесен, кашни колхозникпе колхозницăн ĕçкунĕсем тумалли минимума тултармалла, колхозăн обществăлла хуçалăхĕнче тăрăшса ĕçлемелле.

Колхозниксемпе колхозницăсем пурте обществăлла хуçалăхра тăрăшса ĕçлени хальхи вăхăтра, тырпул пухса кĕртнĕ чухне, уйрăмах питĕ кирлĕ. Ăнса пулнă тырпула тăккаламасăр пухса кĕртмелле, авăн çапас ĕçе лайăх йĕркелесе, государствăна срокчен тырă парса татмалла, вăрлăхлăх хăварнă куркăсене, йĕтĕнпе кантăра, пахча çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртмелле, выльăх апачĕ нумай хатĕрлеме тăрăшмалла. Çав вăхăтрах кĕрхи тырăсене агротехникăлла лайăх срокра акса хăвармалла, кĕрхи çĕртме тумалла тата ытти те. Çак мĕнпур ĕçсене вăхăтра тата лайăх туса ирттерсен колхозсен обществăлла хуçалăхĕ малалла вăйланать, колхозниксем те ĕçкунĕсем тăрăх тырпул тата укçа-тенкĕ нумайрах илеççĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă законсемпе, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире тухса каланă сăмахпа паллашнă май нумай ялсенче колхозниксем обществăлла ĕçе пысăкрах хастарлăхпа хутшăнма пуçларĕç. Халиччен ĕçкунĕсем тумалли минимума тултарман колхозниксем те куллен ĕçе хутшăнма, тăрăшса ĕçлеме пуçлани çинчен хыпарсем килеççĕ. Колхозсенче ĕçри çĕкленÿ чăннипех ÿссе, вăйланса пырать.

Закон тăрăх колхозниксене, ялхуçалăх налогĕ тÿлеме тивĕçлĕ ытти çынсене те çăмăллăхсем памалла тунă. Колхозниксемпе единоличниксене — арçынсем 60 çула çитнĕ тата иртнĕ пулсан, хĕрарăмсем—55 çула çитнĕ тата иртнĕ пулсан, çемьери ĕçлеме пултаракан ытти çынсем хуçалăх ĕçне хăйсен ĕçĕпе хутшăнмаççĕ пулсан, налог тÿлессинчен хăтараççĕ. Ялти интеллигенцие: врачсене, учительсене, агрономсене тата ыттисене те ялхуçалăх налогĕ тÿлеттермеççĕ. Çемье членĕсенчен хăшĕ те пулин çĕр кăмрăк, сăрт-ту, вăрман промышленноçĕнче е промышленноçăн ытти отраслĕсенче ĕçлеççĕ пулсан, ун пек хуçалăхсем ялхуçалăх налогĕ тÿлес тĕлĕшпе çăмăллăх илеççĕ. Законра çар çыннисен çемйисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидсене тата вĕсен çемйисене чылай çăмăллăхсем пама палăртнă. Правительство çавăн пекех иртнĕ çулсенче ялхуçалăх налогĕ енĕпе пулнă парăмсене пĕтĕмпех касарма йышăннă.

Парти райкомĕсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире каланă сăмаха, Верховнăй Совет йышăннă законсене, вăл шутра ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ закона халăха ăнлантарса парас ĕçе куллен-кун туса пымалла. Ку ĕçе пропагандистсемпе агитаторсене анлăн хутшăнтарма кирлĕ. Çапла-вара колхозниксемпе колхозницăсене, механизаторсене, ялхуçалăх специалисчĕсене социализмла ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилес пулать. Колхозсем, МТС-сем тата совхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăна—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстернипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăпартас, çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине нумайлатас задачăна ăнăçлăн татса памалла пултăр.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председательне

Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа

Чĕререн хисеплекен Маленков юлташ!

Совет Правительстви Корея халăхне Корея халăх хуçалăхне юсаса аталантарма пĕр миллиард тенкĕ укçа уйăрса парса пулăшма йышăннă пирки пĕтĕм Корея халăхĕ чĕререн савăнать.

Çакна май, хисеплекен Председатель юлташ, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви, пĕтĕм Корея халăхĕ ячĕпе тата хамăн ятпа Сире, Сирĕн урлă Совет Союзĕн Правительствипе пĕтĕм халăхне чĕререн тав тума ирĕк парăр мана.

Аслă совет халăхĕ Корея халăхне нумай вăхăта пынă Япони империализмĕн пусмăрĕнчен хăтарса, ирĕке тухнă хыççăнхи малтанхи кунсенчен пуçласах чăннипех демократиллĕ, никама пăхăнман государство туса хурассишĕн пыракан пирĕн кĕрешÿре пур енчен те пулăшса тăчĕ, çапла майпа пире хамăрăн Тăван çĕршывăн çурçĕр пайĕнче демократиллĕ хăватлă никĕс туса хума май пачĕ.

Корея халăхĕн Ирĕклĕхшĕн пыракан Отечественнăй вăрçи тапхăрĕнче Корея халăхне чĕререн тухакан кăмăлпа материальнăй пулăшу пани тата мораль тĕлĕшĕнчен пулăшса тăни пире тата та çĕнтерÿ тума хавхалантарса тăчĕç.

Халĕ вăрçă сиен кÿнĕ халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса аталантармалли пысăк задачăсене пурнăçлама тытăннă Корея халăхне Совет Правительстви пулăшу йĕркипе пĕр миллиард тенкĕ укçа уйăрса пама йышăнни пире вĕçĕмсĕр хавхалантарать, хамăрăн Тăван çĕршывăн пĕрлĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре эпир тата та çĕнтерес шанăçа тĕреклетет.

Пĕтĕм Корея халăхĕ çак пĕтĕм укçапа халăх пурнăçне йĕркелесе çитерес, вăрçă хыççăнхи тапхăрта халăх хуçалăхне ура çине тăратас тата хамăр Тăван çĕршыва индустриализацилес ĕçре усă курса хамăрăн Тăван çĕршывăн демократиллĕ никĕсне пур майсемпе те тĕреклетме хатĕр тăрать.

Сире, хисеплекен Председатель, пĕтĕм чĕререн ырă сывлăх сунатăп.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрсен кабинечĕн председателĕ
КИМ ИР СЕН.

Пхеньян, 1953 çулхи августăн 13-мĕшĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче

Республикăра кĕраки мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ кĕраки çителĕксĕр пулса пырать, тесе шутлаççĕ. Кăçалхи августăн 15-мĕшĕ тĕлне республикăра кĕрхи тырăсем акмалли плана пурĕ те 31,4 процент кăна тултарнă, кĕрхи тулă акмалли плана унтан та сахалтарах—29,6 процент кăна тултарнă. Кĕраки ĕçĕсем Улатăр, Етĕрне, Пăрачкав тата Советски районĕсенче уйрăмах çителĕксĕр пыраççĕ, кунта августăн 15-мĕшĕ тĕлне плана 20 процентран та каярах тултарнă. Кĕраки ĕçĕсем çавăн пекех Красноармейски, Вăрнар, Калинино, Тăвай, Чурачăк тата Куславкка районĕсенче çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пыраççĕ. Уйрăм районсенче кĕракине тытăнман колхозсем те пур-ха.

Чылай районсенче кĕрхи тулăна хакламаççĕ, ăна акас тĕлĕшпе кая юлаççĕ. Кĕрхи тырăсем акмалли лайăх срoксем иртсе пыраççĕ пулсан та, Элĕк районĕнчи колхозсем августăн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тулă акма та тытăнман, Етĕрне, Советски, Пăрачкав, Вăрмар, Комсомольски районĕсенчи колхозсем 10 процентран та каярах акнă, государство ресурсĕсенчен уйăрса паракан сортлă кĕрхи тулă вăрлăхĕпе начар усă кураççĕ.

Уйрăм районсемпе колхозсенче агротехникăна сĕмсĕррĕн пăсаççĕ, кĕрхи тырăсене начар хатĕрленĕ çĕрсем çине акаççĕ, ака пахалăхĕ çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, тĕрĕслесе пăхман тата имçамсемпе чÿхемен вăрлăхсем акаççĕ. Чылай МТС-семпе колхозсенче тракторсемпе, лашасемпе ĕçлекен сеялкăсемпе туллин усă курмаççĕ, хĕреслĕ майпа тата ансăр ретсемпе акмалли плана тултармаççĕ.

Кĕрхи тырăсем акас тĕлĕшпе республикăри колхозсенче ĕçсем çакăн пек пулса тăнине чăтма çук тесе шутласа, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

Чăваш АССР Ялхуçалăх тата хатĕрлев министерствине, райисполкомсене, КПСС райкомĕсене кĕрхи тырăсем акас ĕçре кая юлса пынине пĕтерме тата çак ĕçсене республикăри мĕнпур колхозсемпе районсенче кăçалхи августăн 25-мĕшĕ тĕлне вĕçлесе çитермелле тума хушас. Çак тĕллевпе:

а) кĕраки мĕнле пынине кашни МТС тата колхоз тăрăх уйрăммăн пăхса тухмалла, кĕраки ĕçĕсем енĕпе кая юлса пыракан колхозсене ертсе пыракан работниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсене ямалла;

б) МТС-семпе колхозсенчи тракторпа тата лашапа ĕçлемелли сеялкăсемпе усă курассине лайăхлатмалла, сменăри тата кулленхи нормăна тултармалла тата ирттерсе тултармалла;

в) кĕрхи тырăсем акма çĕрсене лайăх хатĕрлесси çине тимлĕн пăхмалла тата кĕраки пахалăхне çирĕп тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилемелле, начар хатĕрленĕ çĕрсем çине акни пулмалла мар, кондицие ларман тата сортсăр вăрлăхсемпе акассине пĕтермелле, хĕреслĕ майпа тата ансăр ретсемпе акмалли плана тултарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, акмалли лайăх агротехника нормисемпе усă курмалла.

РАЙОНСЕМ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКМАЛЛИ ПЛАНА АВГУСТĂН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Мĕн пурĕ акнă	Вăл шутра тулă акнă
Чкаловски	47	—
Шăхасан	45	28
Шупашкар	41	25
Шăмăршă	41	14
Вăрмар	40	9
Комсомольски	39	9
Октябрьски	39	16
Кувакино	38	58
Канаш	38	38
Первомайски	37	30
Елчĕк	37	—
Муркаш	36	17
Сĕнтĕр	34	23
Сĕнтĕрвăрри	32	23
Ишлей	32	33
Хĕрлĕ Чутай	30	35
Çĕрпÿ	30	22
Элĕк	29	—
Йĕпреç	27	31
Çĕмĕрле	24	53
Куславкка	24	30
Чурачăк	23	24
Тăвай	23	64
Калинино	23	11
Вăрнар	22	35
Красноармейски	20	19
Советски	20	6
Пăрачкав	18	9
Етĕрне	18	4
Улатăр	15	45

АВĂН ÇАПАССИПЕ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАССИНЕ ХĂВĂРТЛАТМАЛЛА

ЭЛĔК. «Сталинград» колхозра ыраш вырма тухсан тăваттăмĕш кунхех авăн çапма пуçланă. Кĕске вăхăтрах государствăна 550 центнер паха тырă панă.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозра ку ĕç пачах урăхла—черетпе пулса пырать. Ахаль мар ĕнтĕ иккĕмĕш бригадăри колхозниксем «малтан вырса пĕтеретпĕр те, унтан çапма тытăнатпăр» теççĕ. Колхоз председателĕ В. Герасимов кунпа килĕшсе тăрать.

Кунта тырă вырма тухсан 16 кун иртсен тин 1-мĕш бригадăра молотилкăпа авăн çапма пуçланă, анчах унта те ĕçе кирлĕ пек организациленмен. Молотилкăран тухнă улăм итем çинче йĕркесĕр саланса выртать. Колхозниксем чылайăшĕ ĕçе хутшăнмаççĕ, анчах колхоз правленийĕ ним тума та йышăнмасть. Çавна пула авăн çапассипе государствăна тырă парас ĕçсем кая юлса пыраççĕ. Тырă тасатмалли машинăсем юсавсăр пирки ыраш тасатмасăр выртать.

А. ОРЛОВ.

Çĕнĕ обязательство илтĕмĕр

П. Иванов комбайнер каласа пани

Шупашкар МТС-ĕнче эпĕ нумай çул хушши тракторист пулса ĕçлерĕм, кăçал вара комбайнпа ĕçлеме тытăнтăм.

Мана «Коммунар» комбайн шанса пачĕç. Манăн помощник пулма Г. Афанасьев механизатора, тракторпа ĕçлеме Л. Иванов трактористăна çирĕплетрĕç. Тырпул пухса кĕртме тытăниччен эпир комбайнпа трактора лайăх юсаса, вĕсен кашни детальне ик-виçĕ хут тĕрĕслесе тухрăмăр. Хамăр ĕçлекен «Красное знамя» колхоза тырă вырма тухиччен чылай малтан çитрĕмĕр.

Малтанхи кунсенче эпир ыраш вырттăмăр, халĕ çурхи тулă пухса кĕртетпĕр. Тухăçлă ĕçленипе пĕрлех, эпир ĕç пахалăхĕшĕн те çине тăрса кĕрешетпĕр, Тăкаксем ан пулччăр тесе, эпĕ тырă хăмăлне 10—12 сантиметр кăна хăваратăп. Хăмăла вăрăм хăварсан пучахсем касăлаççĕ, мотовило хăйкачисем вара вĕсене хедер урлă сирпĕнтереççĕ е вĕсем çĕре ÿксе юлма пултараççĕ.

Комбайна тата трактора техника тĕлĕшĕнчен лайăх пăхса тăрас пулать. Ку вăл каламасăрах паллă: машинăри кăлтăка çийĕнчех тÿрлетмесĕр нихçан та тухăçлă ĕçлес çук. Комбайна та, трактора та эпир ĕçе тытăнас умĕн тĕрĕслесе тухатпăр. Ĕçлеме пуçланăранпа манăн агрегат ванни, чарăнса ларни пулман.

Социализмла ăмăртăва хутшăнса, кăçал эпĕ 180 гектар тырă вырса çапма обязательство илнĕччĕ. Халĕ куллен нормăран ирттерсе 3—4 гектар тырă вырса çапатăп, хăшпĕр чухне ытларах та. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне 170 гектар çинчи тырпула пухса кĕртрĕм.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, эпир çĕнĕ обязательство илтĕмĕр, комбайнпа кăçалхи сезонта 250 гектартан кая мар тырпул пухса кĕртме пултăмăр. Панă сăмаха пурнăçлассишĕн кĕрешесси пирĕншĕн халĕ пĕрремĕш тивĕç пулса тăрать.

Ялти çĕкленÿ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Путь Ленина» колхоз августăн пирвайхи пилĕккунлăхĕнче государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртура районта 18-мĕш вырăн йышăннăччĕ. Иккĕмĕш пилĕккунлăхра вăл, çулталăкри плана çуррине тултарса, пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Тырă парас хăвăртлăх ÿссех пырать.

— Çакă пĕтĕмпех колхозлă ял ĕçченĕсен ĕçри хастарлăхĕ вăйлăн çĕкленнинчен килчĕ,— тесе каласа парать колхозри парторганизаци секретарĕ Г. Илларионов юлташ.— СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕпе тата СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă законсемпе чунтан-чĕререн хавхаланса колхозниксем ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕç.

Чĕререн савăнаççĕ колхозниксем. Сесси материалĕсене тата Г. М. Маленков юлташăн сăмахне вĕсем радио тăрăх итленĕ. Унтан хаçатсенче вуласа пĕлнĕ.

Колхозри уй-хир бригадисемпе механизаторсем хушшинче Г. М. Маленков юлташ сăмахĕпе сесси йышăннă законсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе 29 агитатор ĕçлет. Вĕсем колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Сесси материалĕсене колхозниксене ăнлантарса парас тĕлĕшпе А. Алексеев, А. Гурьев, П. Гурьев коммунистсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Партипе правительство совет халăхĕн куллен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшни çине колхозниксем ĕçпе ответлеççĕ. Колхозри виççĕмĕшпе тăваттăмĕш бригадăсенчи ĕçченсем мĕнпур пĕрчĕллĕ культурăсене 3 эрнере, плана палăртниччен 3 кун малтан вырса пуçтарчĕç.

Авăн çапакан бригада та ĕçре хастарлăх кăтартать. Л. Николаев машиновед «МК-1100» молотилкăна пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерет, сменăра 12 тонна вырăнне 15 тонна тырă çапать. Молотилкăран тухакан таса тырра тÿрех хатĕрлев пунктне ăсатаççĕ. В. Посадский шофер Çĕрпÿри хатĕрлев пунктне куллен 6 хутлать. Колхоз автомашинăпа тата лавсемпе куллен 11—12 тонна тырă леççе тăрать. Обязательнăй поставка планне тултарнă, натуроплата шучĕпе те чылай тырă леснĕ.

Колхоз уй-хирĕнче кĕрхи тырăсем акас ĕç те хăвăрт пулса пырать.

Н. ОРЛОВ. (Хамăр корр.).

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА МĔНЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
Августăн 15-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Етĕрне	60,3
Шупашкар	57,7
Ишлей	56,3
Улатăр	56,2
Шăхасан	54,2
Кувакино	53,7
Тăвай	53,5
Пăрачкав	52,1
Муркаш	51,9
Куславкка	45,6
Канаш	45,1
Вăрмар	41,9
Чурачăк	40,5
Сĕнтĕрвăрри	39,8
Елчĕк	39,5
Красноармейски	39,1
Советски	38,5
Йĕпреç	38,4
Октябрьски	37,2
Калинино	36,8
Сĕнтĕр	36,4
Çĕрпÿ	35,6
Хĕрлĕ Чутай	34,3
Çĕмĕрле	32,5
Комсомольски	31,8
Вăрнар	31,6
Шăмăршă	30,5
Чкаловски	30,3
Элĕк	26,6
Первомайски	26,1

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ АВГУСТĂН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырăсем пухса кĕртнĕ	Комбайнсемпе вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă
Етĕрне	79	59	100	50
Советски	78	34	70	23
Чурачăк	75	42	75	30
Красноармейски	74	37	61	27
Хĕрлĕ Чутай	73	60	79	30
Муркаш	72	42	63	34
Елчĕк	71	42	42	32
Комсомольски	70	33	56	36
Шăхасан	70	36	61	35
Первомайски	69	31	47	37
Калинино	68	41	59	28
Элĕк	67	36	69	31
Чкаловски	67	31	49	35
Шупашкар	66	40	53	33
Çĕрпÿ	66	47	61	35
Çĕмĕрле	65	35	68	32
Йĕпреç	65	57	93	38
Вăрмар	65	34	56	32
Сĕнтĕр	64	39	55	35
Октябрьски	63	40	43	25
Ишлей	63	43	52	39
Вăрнар	62	37	55	38
Кувакино	61	53	68	81
Куславкка	60	36	36	32
Шăмăршă	59	35	50	37
Сĕнтĕрвăрри	57	32	37	31
Канаш	57	44	45	39
Тăвай	56	28	44	35
Улатăр	53	42	63	66
Пăрачкав	49	41	61	67

Хĕрÿллĕ ĕçре

ПЕРВОМАЙСКИ. Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕрхи тырăсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртрĕç, часах çуртри вырса пĕтереççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлăхĕ колхозра машинăсемпе туллин усă курнинчен килет. Ф. Смирнов юлташ ертсе пыракан трактор бригади колхоза лайăх пулăшать. П. Макаровпа В. Ильеров комбайнерсем 200 гектар ытла тырă вырнă. Комбайнпа вырнă тырăн улăмне И. Лысков тракторист тракторпа кăкарса ĕçлекен волокушăпа турттарса пырать, вара ăна çийĕнчех купаласа хураççĕ.

Колхозăн 4 автомашина пур. Икĕ автомашинăпа комбайн бункерĕнчи тырра турттарса тăраççĕ, иккĕшĕпе—Йĕпреçри хатĕрлев пунктне вĕçĕ-хĕррисĕр тырă леççе параççĕ. Колхоз государствăна тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах ирттерсе тултарать. Августăн 14-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне 5 пин пăт ытла тырă леснĕ. Çак ĕçре уйрăмах автомашина шоферĕ С. Козлов коммунист питĕ тăрăшать. Вăл колхоз склачĕсенчен 40 километрта ларакан хатĕрлев пунктне кунне ик-виçĕ рейсран кая мар тăвать. Çапла шоферсем хатĕрлев пунктне кашни кунах 600 пăтран кая мар тырă леççеççĕ. Автомашинăсем çинче грузчиксем пулса ĕçлекен çамрăк колхозниксем И. Емелюков, Н. Киргизов, В. Миронов, В. Петров ырма-канма пĕлмеççĕ. Колхоз государствăна тырă памалли плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

— СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисем тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире тухса каланă сăмах пирĕн ĕçри хастарлăха темиçе хут ÿстерчĕ. Эпир кăçалхи ялхуçалăх çулне кăтартуллă вĕçлĕтпĕр,— теççĕ колхоз ĕçченĕсем.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

РСФСР Верховнăй Совечне пухасси çинчен

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессине 1953 çулхи августăн 25-мĕшĕнче Мускав хулинче пухас.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. ТАРАСОВ.
РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ И. ЗИМИН.

Мускав, 1953 çулхи августăн 15-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

П. К. Капитонов юлташа Чăваш АССР Культура министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Петр Капитонович Капитонов юлташа Чăваш АССР Культура министрĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи августăн 17-мĕшĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кадрсене тĕрĕс суйласа илмелле

Икĕ çул каярах парти райкомĕ, колхозсене ертсе пыракан кадрсен йышне тĕреклетес тĕллевпе, районти тĕрлĕ организацисемпе учрежденисенче ĕçлекен уйрăм работниксене колхозсене ячĕ. Фомин, Семенов, Белов, Плотников юлташсене, райком сĕннипе, колхоз председателĕсем пулма суйланă.

Колхозсене апла пыма палăртнă кадрсем уйăрса ияа кирли çинчен райком тĕрĕс решени йышăннă, анчах çак кадрсене суйласа лартнă чухне, вĕсен политикăлла тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслесе пăхмасăр, райком пысăк йăнăш турĕ.

Маларах асăннă юлташсенчен пĕри те ялхуçалăх специалисчĕ мар, районти организацисемпе учрежденисенче ĕçленĕ чухне те вĕсем хăйсене нихăш енчен те палăртайман. Паллах ĕнтĕ, вĕсем колхоз председателĕ пулса артель производствине лайăхлатас ĕçре татăклă улшăну тăвассине çирĕппĕн шанма та пулман.

Фомин юлташ, Сĕрпўри Горпо правлени председателĕн заместителĕ пулнăскер, хăйне «Правда» колхоз председателĕ пулма суйласанах, хăйшĕн кăна тăрăшма пуçланă. Горпона таврăнса вăл виçĕ уйăхри ĕç укçи илсе тухса кайнă, колхоза çитсе лайăх хăналаннă, унтан, ик-виçĕ уйăх хушши çапкаланса çўренĕ хыççăн, Шупашкара тухса тарнă. Государствăна, Горпона тата колхоза улталанăшăн Фомина никам та ответ тыттарман.

Семенов, районти перекет кассин заведующийĕ пулнăскер, унти мĕнпур ĕçе пăтраштарса пĕтернĕ, вăл яланах мухмăрлă-сухмăрлă çўренипе пурте курса тăнă. Хăйне «Красный этновец» колхоз председателĕ пулма суйласан, вăл пирвайхи кунсенчех колхоз шучĕпе ĕçме тытăннă. Юлашкинчен Семенов артель Уставне хиревсĕррĕн пăсса преступленилле ĕçсем тунă хыççăн парти райкомĕ ăна парти ретĕнчен, ун хыççăн колхоз председателĕнчен кăларнă.

Парти райкомĕн пропагандисчĕ пулса ĕçленĕ Плотников юлташа, райком сĕннипе, «Коммунизм» колхоз председателĕ пулма суйланă. Вăл ертсе пынă вăхăтра колхоз организацийĕ хуçалăх тĕлĕшĕнчен тата ытларах чакнă, государство заданийĕсене пурнăçламан пулнă. Плотников юрăхсăр работник пулнине курса, колхозниксем ăна председательрен кăларнă.

Çавнашкал çынсем ертсе пынă чухне юхăнса çитнĕ «Правда», «Коммунизм», «Красный этновец» колхозсене тата ыттисене те тĕреклетес тĕлĕшпе парти райкомĕпе райисполкомăн юлашки вăхăтра питĕ нумай ĕçлемелле пулчĕ. Анчах ку колхозсем иртнĕ çулсенче кĕрсе ўкнĕ йывăрлăхран халĕ те тухса çитеймеççĕ.

«Ку вăл ик-виçĕ çул каярах пулнă йăнăшсем, халĕ вĕсене пĕтернĕ е пĕтерсе пыраççĕ», теме те пулать. Кунпа та килĕшме çук. Кадрсене суйласа илес ĕçре йăнăшсем тăвас, воспитани парас енĕпе парти райкомĕ халĕ те йăнăшсем тăвать.

Белов юлташа, райком пропагандисчĕ пулнăскере, Маленков ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулма суйланăччĕ.

Çулталăк хушшинче Белов хăй валли лайăх çурт лартма ĕлкĕрчĕ, тусĕсемпе тăванĕсене те манса хăвармарĕ. Иртнĕ хĕлле, государство валли вăрман турттармалли плана пурнăçлас вырăнне, вăл тусĕсемпе тăванĕсем валли Атăл леш енчен йывăç кўрсе пама 30—35-шер лав ярса тăчĕ, государство планне тултарма яхăна та ямарĕ.

Иртнĕ кĕркунне, Белов тăрăшманнипех, колхозра выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемен пирки, хĕлле тата çуркунне нумай выльăха япăхтарнă. Кăçалхи çул пуçламăшĕнче, колхозри отчетпа суйлав пухăвĕнче, колхозниксем Белов юлташа председатель пулма суйламарĕç.

Акă халĕ райком, нумай шутласа тăмасăрах, Белов юлташа штатри пропагандист пулма суйласа илчĕ. Маленков ячĕпе тăракан колхозри коммунистсем тата тўрĕ кăмăллă колхозниксем тĕрĕссипе тĕленеççĕ: колхозра парти директивĕсемпе решенийĕсене пурнăçлама тăрăшман, колхозниксен умĕнче авторитетне çухатнă çын мĕнле-ха пропагандист пулма пултартăр?

«Красный этновец» колхоз председателĕ пулма Матвеев юлташа суйланă. Вăл ялхуçалăх артелĕн Уставне тăтăшах пăсать, коллективлăн ертсе пымалли принципа хисепе хумасть, массăпа çыхăнса ĕçлемест, çавна пула пысăк йăнăшсем тăвать.

Колхозниксем Матвеев юлташа унăн ертсе пырас ĕçĕнчи йăнăшсемшĕн тата çитменлĕхсемшĕн критиклеме хăтлансан, вăл, яланхи пекех, пĕр сăмахпа ответлет: «Кăларăр мана председательрен, эпĕ хам валли урăх ĕç те тупатăп».

Сĕрпў районĕнче Матвеев пек çынсем ăшă вырăн часах тупаççĕ те. Максимов юлташ, колхоз тата ял Совет председателĕ пулса пысса та ĕретлĕ ĕçлесе кăтартманскер, халĕ хулари пекарня заведующийĕ пулса ĕçлет. Пекарня чăтма çук япăх ĕçлени, çăкăр пахалăхĕ начар пулни çинчен пĕтĕм хулипе тарăхса калаçаççĕ, анчах Максимов нимĕн пулман пекех, шухăшсăр-туйăмсăр пурăнать.

Сĕрпўри Горпо Прокопьев юлташ председатель пулса ĕçленĕ чухне начарланса çитнине, таварçаврăнăш планне тултарайманнине пурте пĕлеççĕ. Прокопьев юлташ хăйĕн политикăлла пĕлĕвне ўстерме тăрăшман работник пулни те райкомшăн тахçанах паллă. Пайщиксен конференцийĕ ăна правлени председателĕ пулма суйламан.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Прокопьев юлташа «Заготскот» кантурĕн управляющийĕ пулма уйăрса лартрĕç. Ертсе пырас ĕçри кадрсене суйласа илес принципа тĕрĕссĕн пурнăçламанни район хуçалăхла-политикăлла кампанисене йывăр ирттернинче те сисĕнет.

КПСС XIX-мĕш съездĕ парти организацийĕсене çирĕп кăтарту пачĕ: кадрсене суйласа илес ĕçри тĕп задача парти, государство тата хуçалăх организацийĕсене партипе государство интересĕсене парăннă, ĕçе лайăх пĕлекен тата ăна малалла илсе пыма пултаракан çынсемпе çирĕплетесси пулать.

Çак кăтартăва КПСС Сĕрпў райкомĕн тўррĕн пурнăçласа пымалла.

А. ОХОТНИКОВ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен анлăн çутатмалла

Йĕпреç районĕнчи колхозсем вăрçă хыççăнхи çулсенче общественăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Çапах та ку ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Хăшпĕр выльăхсене ĕрчетмелли плана тултарнă пулсан та, вĕсен тухăçлăхĕ халлĕхе питĕ сахал.

Йĕпреç районĕнчи «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакцийĕ çак çитменлĕхсене курмасть. Хаçат хăйĕн страницисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен çырнă материалсене сайра хутра кăна пичетлет. Вĕсем те çиелтен çырнă пĕлтерўсем кăна.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăх сахал пулни чи малтанах вĕсене çитерме кирлĕ таран апат хатĕрлеменнинчен килет. Апат çитмен пирки чылай колхозсем хĕле кĕрсен выльăхсен шутне те чакараççĕ. Ăратлă выльăхсемех ырханланса хăйсен лайăх енĕсене çухатаççĕ. Апла пулсан та районти хаçат выльăх апачĕ туса хатĕрлесси çинчен питĕ сахал çырать. Çуркунне, тырпул акнă вăхăтра, «Пысăк тухăçлă сĕрулмишĕн» тата «Выльăх апачĕн çирĕп никĕсĕшĕн кĕрешер» ятлă умстатьясем тата кишĕр акни çинчен пĕр заметка пичетленĕ пулнă. Ун хыççăн выльăх апачĕ валли акнă культурăсене пăхса ўстересси çинчен çырма маннă.

Халĕ—выльăх апачĕ хатĕрлемелли чи ответлă тапхăр. Анчах районта чылай колхозсем ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Силос хывас ĕç юлса пырать. Мичурин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем утăлăх акнă викăна çулса пуçтарман. Нумай колхозсем çулса пуçтарнă утта шута илсе приходламан. Çавна пула утта салатса пĕтерни сисĕнет. Тырă вырма пуçланăранпа пĕр уйăх çитет пулин те Крупская ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те комбайн хыççăн юлнă улăма пуçтарса купалама тытăнман. Çав колхозсен хирĕнчи улăм сапаланса выртать. Хаçат çав çитменлĕхе пĕтерме колхозниксене мобилизацилемест.

Районта Киров ячĕпе тăракан, «Красный фронтовик» колхозсем улăхри тата хире утăлăх акнă курăксене вăхăтра пуçтарса кĕнĕ, силос хывас тĕлĕшпе те лайăх ĕçлеççĕ. Малта пыракансен опычĕпе тĕплĕн паллаштарни ыттисене хăйсен ĕçне тĕрĕс организацилесе пысăк çитĕнўсем тума пулăшать. Анчах хаçат вулакансене малта пыракансен меслечĕпе паллаштармасть.

Хаçатăн июлĕн 9-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Свешников юлташăн «Силос хывреç» ятлă вунă йĕркеллĕ заметки пичетленнĕ. Свешников юлташ, хăй МТС-ăн главнăй агрономĕ пулин те, заметкăра çав ыйтăва тĕплĕн кăтартса паман.

Общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр лартас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. «Правда», «Заря», «Трудовик» колхозсем ку таранл çитсе те планпа палăртнă çуртсене тума тытăнман. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем, эпир вăрман çывăхĕнче пурăнатпăр тесе, строительствăра вырăнти материалсемпе усă курасшăн мар. Колхоз руководителĕсем фермăсенчи работниксен пурнăç условийĕсене аванлатасси тата механизацилесе ĕçе çăмăллатасси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Çавна пула фермăсенче ĕçлекенсем тăтăшах улшăнса тăраççĕ. Анчах хаçатра çав çитменлĕхсене палăртса критиклемеççĕ.

Редакцинче ĕçлекенсем районта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пынине тĕплĕн пĕлмен пирки хаçатра малта пыракансен çитĕнĕвĕсене кăтартса параймаççĕ. «Путиловка», Киров ячĕпе тăракан колхозсем фермăсенчи йывăр ĕçсене механизациленĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра шлак-бетонран кормокухньăсем, силос башнисем тăваççĕ, ытти çурт-йĕрсем те нумай лартаççĕ. Ку колхозри рационализаторсем фермăсене шыв памалли, тымарçимĕçсем пĕçермелли çĕнĕ, йўнĕ тăракан майсем тупнă. Анчах хаçатра вĕсен ĕçне кăтартса паракан материалсем тупса вулама çук.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз ферминче ĕçлекенсем кăçал выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша 250 пин тенке çитерессишĕн кĕрешеççĕ. Ку колхозри Н. Яковлева, Т. Андреева дояркăсем кашни ĕнерен 1.300 литр ытла сĕт суса илчĕç, ăмăртура республикăра малти вырăнсенчен пĕрне йышăнма тивĕçлĕ пулчĕç. Колхозри пур пек апатран рацион туса çитерме пĕлни ĕнесен сĕт тухăçне уйăхран уйăха ўстерсе пыма май парать. Маларах асăннă дояркăсем çамрăк пăрусене хутман пўртре лайăх хĕл каçараççĕ. Ку колхозра государствăна паракан сыснасене самăртассине лайăх организациленĕ. Анчах Сталин ячĕпе тăракан колхозри ĕçченсен паха ĕçĕ çинчен çырнă материалсем хаçатра курма çук.

Çуркунне пĕр вăхăтра хаçатра «Малта пыракансен трибуни» тесе статьясем пичетлеме пуçланăччĕ. Унта стахановецсем хăйсен опычĕ çинчен çырнă статьясем тухатчĕç. Анчах тырпулпа техникăлла культурăсем ўстересси çинчен ик-виçĕ статья пичетленĕ хыççăн хаçатăн çак паха пуçарăвĕ сўнсе ларчĕ. Редакцин малашне хаçат страницинче выльăх апачĕ хатĕрлес, çурт-йĕр лартас, выльăхсен тухăçлăхне ўстерес, вĕсен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе малта пыракансене хаçатра вырăн ытларах пама тăрăшмалла.

Колхозниксем, общественăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатса пынă вăхăтрах, хăйсен килĕнче те выльăх усраççĕ. Колхозсем хăйсен членĕсене килти выльăха усрама кирлĕ условисем туса памалла. «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат юлашки çулсенче колхозниксен килĕнче выльăх ĕрчетесси çинчен çырма пачах пăрахнине те ырлама çук.

Общественăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине кадрсем татса параççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ кадрсем хатĕрлесси колхоз правленийĕсемпе парти организацисен тĕп задачи пулса тăрать. Анчах та хаçат колхозсенче кадрсем хатĕрлес, вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес, фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе организацилес, социализмла ăмăртăва сарса пырас ыйтусем тĕлĕшпе çырманпа пĕрех.

Колхозсем выльăхсен шучĕпе тухăçлăхне ўстерессишĕн вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ пекех хастарлăн кĕрешме тивĕçлĕ. Çавăнпа районти хаçатсем выльăх ĕрчетес ĕçе тырпул туса илесси çинчен çырнă пекех анлăн çутатмалла.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче

Кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче СССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов Демократиллĕ Германи Республикин СССР Союзĕнчи Дипломатие Миссин Пуçлăхне Рудольф Аппельта йышăнса çапла пĕлтернĕ:

Совет Правительстви Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацине августăн 20-мĕшĕнче Мускава килме чĕнме йышăннă. Совет Правительстви кунта çакна шута илет: халăхи вăхăтра Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи хутшăнусемпе çыхăнса тăракан хăшпĕр пысăк ыйтусене, çавăн пекех тата Германи ыйтăвĕпе пĕтĕмĕшпе çыхăнса тăракан ыйтусене пăхса тухни вырăнлă пулать.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ Мускава килсе çитиччĕнех Совет Правительстви США, Англи тата Франци Правительствисене нота ярса пама шутлать. Унта Совет Союзĕ Германи ыйтăвĕ тăрăх тытакан позици çинчен тата Совет Правительствин тивĕçлĕ сĕнĕвĕсем çинчен каласа панă.

Демократиллĕ Германи Республикин делегацийĕ килни Германи ыйтăвне тĕплĕн сўтсе явма май парать тата Совет Правительстви шанса тăнă тăрăх, вăл Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи туслă хутшăнусене малалла аталантарас ĕçре çĕнĕ пысăк тапхăр пулса тăрать.

Р. Аппельт çак чĕнў çинчен Демократиллĕ Германи Республикин Правительствине пĕлтерме пулнă.

Кĕперсем çинчен

Елчĕкпе Канаш хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх тырă тиенĕ машинăсемпе лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр иртеççĕ. Вĕсем Канашри элеватора васкаççĕ. Пурин те пĕр шухăш-ĕмĕт: государство умĕнчи пирвайхи хисеплĕ тивĕçе чыслăн пурнăçламалла.

Анчах тырă леснĕ çĕрте чăрмавсем те пур-ха. Чи пысăк чăрмавсенчен пĕри вăл—кĕперсем юсавлă пулманни.

Чутей ялĕнчи кĕпере пăсса тĕпрен юсасси çинчен темиçе çул хушши калаçаççĕ, анчах ĕç малалла каймасть. Шоферсем хăлтăр-халтăр кĕпер урлă шикленсе каçаççĕ.

Чутей ялĕнчен сакăр километрти кĕпер тата япăхрах. Ку кĕпер çурри ишĕлсе аннă, анчах ăна юсасси çинчен никам та шухăшламан. Хĕрў вăхăт çитсен кăна 243-мĕш çул участокĕн работникĕсем хыпăнса ўкнĕ. Халĕ кĕпер айне тăпра тултараççĕ. Анчах ку ĕç те кирлĕ пек хăвăртлăхпа пулса пымасть.

Каракăлă ялĕпе Уçырма хушшинчи кĕпер те юрăхсăра тухнă. Ăна тырпул пухса кĕртме тытăниччен тĕпрен юсаса лартмалла пулнă. Ун чухне çул участокĕн руководителĕсем «вăхăт пур-ха, ĕлкĕрĕпĕр» тесе нимĕн те туман. Халĕ кĕпере пăсса пăрахнă. Машинăсемпе лавсене çўреме вăхăтлăх кĕпер кирлĕ. Ăна тума шухăшламан. Икĕ пĕрене çине хăмасем сарса хунипех лăпланнă.

Августăн 12-мĕшĕнче ку кĕпер патĕнче çакăн пек япала курмалла пулчĕ. «Кĕпер» патне 25—30 машина пухăннă. Машинăсем çав кĕпер урлă каçса ниепле те сăрт çинелле хăпарса каяймаççĕ. Машинăсене шоферсем черетĕн-черетĕн тата тырă леçме каякансем пулăшнипе тĕртсе хăпартаççĕ. Виç-тăватă машинăна каçарсах пĕр сехете яхăн вăхăт иртрĕ. Унта та кунта шоферсем ятлаçни илтĕнсе тăрать.

Кĕпере хăвăртрах туса пĕтермелле. Материал илсе килнĕ. Анчах кĕпер тăвас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест.

243-мĕш çул участокĕн руководителĕсен юрăхсăр кĕперсене юсас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе халех васкавлă ĕçсем тумалла.

А. ЖИРНОВ.

ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХ

Советски районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци 30 коммуниста пĕрлештерсе тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсен чи ответлă тапхăрĕнче—ăнса пулнă вăйлă тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозри парторганизаци пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл коммунистсен ĕçри авангардлă рольне пĕрмаях вăйлатса тата вĕсен ответлăхне ўстерсе пырать.

Партилле-политикăлла ĕçе анлăн туса пыма колхозри 36 çынтан тăракан агитколлектив (руководителĕ колхозри партбюро секретарĕ Т. Исаев юлташ) пысăк пулăшу парать. Парторганизаци агитаторсен инструктивлă семинарне тăтăшах ирттерет. Агитаторсем кашни кунах колхозниксене Тăван çĕршыври çĕнĕ хыпарсем çинчен, партипе правительство ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн тата вĕсен культурăлла шайне ўстерессишĕн туса ирттерекен ĕçсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Çак кунсенче агитколлектив хăйĕн ĕçне уйрăмах вăйлатрĕ. Агитаторсем, бригадăсенче пулса, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă Законсене тата сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха уй-хир ĕçченĕсене ăнлантарса пачĕç. Халĕ çав документсем çинчен калаçусем, докладсем ирттереççĕ.

Çак кунсенче колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ палăрмаллах ўсрĕ. Вĕсем вăйлă тырпула уйран пухса кĕртес ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем тăваççĕ. Колхозниксем хушшинче социализмла ăмăрту тата та анлăрах сарăлчĕ.

Парти организацийĕ пуçарнипе пур бригадăсенче те уйрăм сдельщина йĕрки тăрăх ĕçлеççĕ. Кашни колхозник хăй мĕн чухлĕ ĕçленине, миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илнине çав кунах пĕлсе тăрать.

Бригадăсем хушшинчи социализмла ăмăрту мĕнле пынине тăтăшах кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ. Бригадăсенче виçĕ кунта пĕрре боевой листоксем, колхозра пилĕк кунта пĕрре «Ленинец» стена хаçачĕ тухса тăраççĕ.

Анчах кунта çакна каласа хăвармалла: парторганизацири коммунистсенчен тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте 7 çын кăна — виççĕшĕ бригадир, тăваттăшĕ рядовой колхозник пулса ĕçлеççĕ. Колхозра машинăсемпе ĕçлессине те тивĕçлипе хаклаççĕ.

Государствăна тырă памалли графика пурнăçласа пыма тытăннă. Транспорт бригади кашни кунах икĕ автомашинăпа тата 49 лавпа хатĕрлев пунктне тырă леçет.

Итем çинче двигатель, тăватă молотилка тата МТС-ăн сложнăй молотилки пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Машиновед Ф. Исаев тата А. Максимова трактористка нормăна яланах ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем кунне 30 тонна таран тырă çапаççĕ.

Çак кунсенче колхоз кĕрхи тырăсем акма тытăнчĕ. Кĕрхи тырăсем акмалли вырăна 20 пин лав ытла тислĕк кăларнă.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз районти Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Герой» колхозсемпе ăмăртса ĕçлет. Социализмла ăмăртура халĕ Ленин ячĕпе тăракан колхоз малта пырать. Çак колхозсем хушшинчи социализмла ăмăрту мĕнле пыни çинчен 10 кунта пĕрре кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ.

— Эпир СССР Верховнăй Совечĕн решенийĕсемпе тивĕçлипех савăнатпăр. Мĕншĕн тесен вĕсем ĕçсыннисен пурнăçне тата ытларах лайăхлатасси çинчен калаççĕ. Пирĕн юратнă Тăван çĕршыв малалла тĕреклене, пирĕн пурнăç тата та пуянтарах, культурăллăрах пулĕ. Çакна эпир сесси решенийĕсенчен тата Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕнчен лайăх туятпăр,—теççĕ Ленин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир ĕçченĕсем.

Г. АНДРЕЕВ.

Каменщиксем хастарлă ĕçлеççĕ

Сўс-кантăр завочĕн строительство площадкинче хĕрўллĕ ĕç пырать. Строительсем Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле завода туса çитерсе ĕçе ярассишĕн кĕрешеççĕ. Çак обязательствăна чыслăн пурнăçласси каменщиксен бригади мĕнле ĕçленинчен нумай килет. Çавна шута илсе, каменщиксем ĕç тухăçлăхне кунтан-кун ўстерсе пыраççĕ. Вĕсем кулленхи ĕç нормине 170—200 процент тултараççĕ.

Элĕн. «Колхоз хаçачĕ».

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçсыннисен пурнăçпа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессине пысăка хурса хаклаççĕ. «1955 çулта,—кăтартнă партин XIX-мĕш съездĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивĕсенче, — массăлла библиотекăсен шутне, 1950 çулхипе танлаштарсан, 30 процентран кая мар, клубсен шутне—15 процент ўстермелле, вĕсем халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе лайăхлатмалла». Кунпа пĕрлех съезд культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕ.

Çак задачăсем культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне парти организацийĕсем çинчен ертсе пырассине лайăхлатма, çапла вара ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçе куллен вăйлатса пыма хушаççĕ. Ĕçсыннисен ўссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме тата культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатса пыма Элĕк районĕнче условисем çителĕклĕ. Пирĕн районта культура çурчĕ, районти библиотека пур. Ялсенче 6 библиотека, 11 клуб тата 10 вулав çурчĕ ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта кăна ялсенче çĕнĕрен 3 вулав çурчĕ уçнă.

Ялсенчи библиотекăсемпе вулав çурчĕсенче кĕнеке фончĕ çулленех ўссе пырать. Районти библиотекăра кăна 14.580 кĕнеке шутланать. Библиотекăсемпе ялсенчи клубсем тата вулав çурчĕсем 221 экземпляр хаçат, 339 журнал илсе тăраççĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсене кĕнекесем туянма çулсеренех районтан укçа нумай уйăрса параççĕ. Культура учрежденийĕсем валли кĕнекесем туянма кăçал кăна 32.400 тенкĕ уйăрнă.

Анчах та ку вăл ĕçĕн пĕр енĕ кăна-ха. Мĕнпур майсемпе пурнăçра те çителĕклĕн усă курас тесен, пуринчен малтан культурăпа çутĕç учрежденийĕсене ĕçре пулăшу парса тăни, вĕсене пултаруллă кадрсемпе çирĕплетни кирлĕ. Парти райкомĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлеме кадрсем суйласа илес, вĕсен политикăлла тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвне ўстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсенчи кашни ответлă работника КПСС райкомĕн номенклатурине кĕртмелле тунă. Вĕсене суйласа илсен, парти райкомĕн бюровĕ пăхса тухса çирĕплетет. Çапла туни работниксен ĕçри ответлăхне ўстерме пулăшать.

Пирĕн районта культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче 31 çын ĕçлет. Вĕсенчен 26 работник вăтам шкул пĕтернĕ, 3 çын специальность паракан вăтам вĕренў заведенийĕсем пĕтернĕ. Вăтам пĕлў илейменнисем—2 работник. Ответлă работниксен составĕ çакăн пек пулни культурăпа çутĕç учрежденийĕсен умĕнче тăракан задачăсене тивĕçтерме май парать.

Анчах та пĕтĕмĕшле пĕлў илнипе кăна лăпланса ларни пысăк йăнăш туни пулĕччĕ. Культурăпа çутĕç учреждениине кирлĕ пек ертсе пыма, калаçусемпе лекцисенче халăхи вăхăтри событисене тĕплĕн çутатса пама, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тĕрĕс ăнлантарса пама, пуринчен малтан, политикăлла пĕлўпе тавракурăма ўстерни кирлĕ. Кунпа пĕрлех пĕтĕмĕшле пĕлўпе ĕç квалификацине те ўстерсе пымалла.

КПСС райкомĕ культурăпа çутĕç работникĕсене политикăлла воспитани парас ĕçе пысăка хурса хаклать. Мĕнпур работниксенчен 12 çын иртнĕ вĕренў çулĕнче марксизм-ленинизм теорине вĕренмелли кружоксене политкурсене çўрерĕ, 19 юлташ харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе хăйсен политикăлла пĕлĕвне ўстерсе пынă. Парти райкомĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсенчи работниксем хăйсен политикăлла пĕлĕвне мĕнле ўстерсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕ. Халĕ, парти вĕренĕвĕн çĕнĕ çулне хатĕрленнĕ май, КПСС райкомĕ культурăпа çутĕç работникĕсене вĕренĕве хутшăнтарас енĕпе тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттерет.

Работниксен квалификацийĕпе ăсталăхне ўстерес тĕлĕшпе семинарсем ирттерни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Парти райкомĕ çак ĕç çине те тимлĕрех пăхма пуçларĕ. Семинарсем ирттермелли плана парти райкомĕ пăхса тухса çирĕплетет. Семинарсенче лекцисем вуласа парас ĕçе политика тĕлĕшĕнчен лайăх хатĕрленнĕ, опытлă юлташсене уйăрса çирĕплетнĕ. Культурăпа çутĕç работникĕсене семинарсенче КПСС райкомĕн секретарĕсемпе ытти ответлă работниксем теорилле ыйтусем тăрăх лекцисем вуласа параççĕ, районти ĕçсыннисем умĕнче тăракан задачăсемпе тĕплĕн паллаштараççĕ.

Чылай работниксем хăйсен квалификацийĕпе пĕлĕвне заочнăй майпа вĕренсе ўстереççĕ. Тенири вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Андреева, Ураскилтри вулав çурчĕн заведующийĕ А. Филиппов, Сарăпăлатри вулав çурчĕн заведующийĕ В. Федотова, Чăваш Сурăм ялĕнчи библиотека заведующийĕ Александрова юлташсем библиотека техникумĕнче заочнăй майпа вĕренеççĕ. Районти культура çурчĕн директорĕ Георгиев юлташ режиссерсем хатĕрлекен шкулта заочнăй майпа вĕренет.

КПСС райкомĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен вĕренĕвĕпе тата вĕсен кулленхи ĕçĕпе тăтăшах интересленет, вĕсен ĕçĕсем çинчен бюро ларăвĕсенче отчетсем итлет. Райком работникĕсем вĕсене вырăнта пулса та кăтартусем параççĕ.

Работниксен идеологилле пĕлĕвĕпе квалификацине тата ответлăхне ўстерсе пыни культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма май пачĕ. Парти организацийĕсем ертсе пынипе клубсемпе библиотекăсем тата вулав çурчĕсем ĕçсыннисем хушшинчи массăлла-политикăлла тата культурăлла ĕçсене палăрмаллах çĕклетсе пыраççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕн решенийĕсемпе, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă законсемпе хавхаланса, районти ĕçсыннисем ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсене пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлеççĕ. Пирĕн районти колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе Советски районĕнчи ĕçсыннисене социализмла ăмăртăва чĕнчĕç. Çак ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешеççĕ ялхуçалăх ĕçченĕсем. Уйхирсемпе колхоз итемĕсем çинче хĕрў ĕç пырать.

Халăхи вăхăтра культурăпа çутĕç учрежденийĕсен лайăхрах ĕçлемелле, ĕçсыннисен ăмăртăвне вăйлатса пыма тăрăшмалла. Калас пулать, районти культурăпа çутĕç работникĕсенчен нумайăшĕ хăйсен тивĕçне тĕрĕс ăнланса туса пыраççĕ.

Акă, Ехремкассинчи ялти библиотекăна илер. Унăн заведующийĕ Иванова юлташ кунта ĕçлеме кĕни нумаях пулмасть-ха. Анчах та вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать, лайăх ĕçлекен работниксенчен пример илсе, вĕренсе пырать. Библиотекăра кĕнеке витринисемпе выставкăсем тунă. Пўлĕмсене плакатсем çырса çапнă. Ку плакатсем пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ мĕнле ўссе пынине лайăх кăтартса параççĕ. Çав плакатсем умĕнче колхозниксем валли час-часах калаçусем ирттернипе курма пулать. Кунтах кĕнекесен списокĕ те пур. Кама мĕнле кĕнеке кирлĕ, вăл çав список тăрăх часах шыраса тупма пултарать.

Халăхи вăхăтра библиотека хăйĕн пĕтĕм ĕçне уй-хирте, итемсем çинче туса пырать. Иванова юлташ колхозниксене хаçат-журнал вуласа парать, кирлĕ литература тупса парать. Нумаях пулмасть кунта колхозниксем «Повесть о сыне» ятлă произведенине пĕрле пухăнса вуларĕç. Иванова юлташа «Правда» колхозри пуçламăш парторганизаци тата унăн секретарĕ И. Яхваров юлташ ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ.

Çавăн пекех Тăватри клуб (заведующийĕ Нестеров юлташ), Сарăпăлатри вулав çурчĕ (заведующийĕ Федотова юлташ) хăйсен ĕçне лайăхлатса пыраççĕ.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар пулчĕç. Сăмахран, Вутланти клуб ытла та начар ĕçленĕ пулнă. Клуб час-часах хупă тăнă. Унăн заведующийĕ Евграфов юлташ килте ларса вăхăта ытларах ирттернĕ. Евграфов юлташ çўлтен кăтартса панă усăллă канашсемпе нихçан та килĕшмен, хăйĕн политикăлла тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвне ўстерме пăрахнă. Çавна пулах ĕнтĕ комсомол организаци ĕçĕнчен те уйрăлса кайнă. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек сўрĕк те таса мар çын культурăпа çутĕç учреждениине ертсе пыма, ĕçсыннисен паянхи культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултараймасть. Евграфов юлташа ĕçрен хăтарма тиврĕ.

Районти культура пайĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ Кузьмин юлташ та хăйĕн пĕлĕвне ўстерес тĕлĕшпе тăрăшмарĕ. Ĕç нумайăшĕ çине йăвантарса касхи партшкула çўреме пăрахрĕ. Юлашкинчен вăл хăйне хăй тĕрĕс мар тыткалама пуçларĕ, активран уйрăлса кайрĕ. Тўрленме кирли çинчен тăтăшах асăрхаттарнă пулин те Кузьмин юлташ хăйĕн йăнăшĕсене тўрлетмерĕ. Юлашкинчен вара ăна ĕçрен хăтарма йышăнмалла пулчĕ.

Пуçламăш парторганизацисен ĕçĕнче те çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр парторганизацисем культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕпе ытла та сахал интересленеççĕ, вĕсен ĕçĕсем çинчен отчетсем те илмеççĕ. Контроль çуккине пула та ĕнтĕ хăшпĕр работниксем ĕçе япăхтарса яраççĕ.

Районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн пуçламăш парторганизацисен ытларах тăрăшмалла. Çавăн пекех райсовет исполкомĕн тата унăн культура пайĕн ялти клубсемпе вулав çурчĕсене тата библиотекăсене ытларах пулăшса пымалла.

А. МИРОНОВ,
КПСС Элĕк райкомĕн секретарĕ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Кама çăмăл фельетон çырма?“

Чкаловски районĕнчи «Авангард» хаçат редакцийĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 20-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Кама çăмăл фельетон çырма?» ятлă статьяна редакци работникĕсемпе çамрăк корреспондентсен канашлăвĕнче сўтсе явни, «Кама çăмăл пурăнма Туçара?» ятлă фельетон авторне М. И. Еллина асăрхаттарни çинчен пĕлтерчĕ.

„Вăрлăх хуçалăхĕ хăйĕн задачине пурнăçламасть“

Июнĕн 23-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «Вăрлăх хуçалăхĕ хăйĕн задачине пурнăçламасть» ятлă статьяра Йĕпреç районĕнчи «Большевик» колхоз районти ытти колхозсене кирлĕ таран лайăх вăрлăх хатĕрлесе параймани, вăрлăха агротехника хушлă пек пăхса ўстерменни çинчен çырнăччĕ.

Ĕçсыннин депутачĕсен Йĕпреç район Совечĕн исполкомĕ статьяри фактсем тĕрĕс пулни, унта асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сўтсе явни, çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Суту-илӳ ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелемелле

ПЕРВОМАЙСКИ. Район Совечӗн сессийӗ суту-илӳ ӗҫне лайӑхлатмалли майсем ҫинчен ҫӳтсе явса, ку тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решени йышӑнчӗ.

Районти хӑшпӗр суту-илӳ организацийӗсем, сесси решенине пурнӑҫласа, хӑйсен ӗҫне кӑштах лайӑхлатрӗҫ. Район иккӗмӗш квартална тавар ҫаврӑнӑш планне ирттерсе тултарчӗ. Анчах суту-илӳ организацийӗсем пурте пӗр тикӗс ӗҫлесе пымаҫҫӗ-ха.

Район центрӗнчи магазинсем ытти магазинсемпе ларексемпе паха тӗслӗх пулса тӑмалла. Кунта вара ҫакна курма ҫукха. Район центрӗнчи виҫӗ магазинран пӗри те пӗрремӗш ҫурҫуллӑхри тавар ҫаврӑнӑш планне тултарайман.

Тӳррипе каласан, плана тултарма вӗсене май та туса паман. Акӑ, хуҫалӑх магазинне ревизи тума пуҫланӑранпа уйӑх ҫурӑ ҫитет. Ревизи малтан палӑртнӑ тӑрӑх, ҫак магазин заведующийӗн Петрова юлташӑн 10 пин тенкӗ укҫа ытлашши тухнӑ. Кӑна районти потребительсен обществин руководителӗсемпе ревизорсем ҫапла ӑнлантарчӗҫ: Петрова июль уйӑхӗнче райпо складӗнчен 10 пин тенкӗлӗх тавар илнӗ те ӑна приходламан иккен. Татах икӗ хут ревизи тунӑ хыҫҫӑн ӗҫ пачах урӑхла пулни курӑнчӗ: Петрова продавецӑн нимӗнле ҫитменлӗх те ҫук, документсене райпо бухгалтеринче арпаштарса янӑ. Ҫавна май райпо складне ҫур уйӑх ытла ӗнтӗ ревизи тӑваҫҫӗ. Ревизи палӑртнӑ тӑрӑх, склад заведующийӗ Алеев 56 пин тенкӗ ытла растрата туни курӑнать. Халӗ склада каллех ревизи тума тытӑнаҫҫӗ. Хуҫалӑх магазинӗ хӑҫан уҫӑлассин паллӑ мар.

Район центрӗнчи чайнӑйра та пысӑк йӗркесӗрлӗхсем пур: апатсен пахалӑхӗ начар. Райпо вӑхӑтра сахӑр кӳрсе килейменни пирки юлашки вӑхӑтра кунта чей, кофе тата компот пӗҫерме пӑрахнӑ. Чайнӑй заведующийӗ Петров юлташ ӗҫсынниссен жалобисем тӑрӑх вӑхӑтра мера йышӑнмасть. Халӗ пахча ҫимӗҫсем ӗлкӗрчӗҫ. Чайнӑй патӗнче кашни куйах уйрӑм ҫынсем хӑяр, помидор, ҫырла, панулми, кишӗр сутаҫҫӗ. Чайнӑйра вара пахча ҫимӗҫсенчен хатӗрленӗ апатсене курайместӑн. Пекарньӑра пӗҫерекен ҫӑкӑр пахалӑхӗ питӗ начар.

Районти суту-илӳ пайӗ (заведующийӗ В. Саланова юлташ) тата райпо руководителӗсем А. Мадюковпа В. Шакин юлташсем кадрсене суйласа илес, вӗсене вӗрентсе воспитани парас ӗҫе тивӗҫлипе хакламаҫҫӗ, суту-илӳ организацийӗсен ӗҫне тӑтӑш тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ. Ҫавна пулах ӗнтӗ районта растратчиксене тата кооперации пурлӑхне ҫаратакансене хирӗҫ кӗрешесси те япӑх пырать. Кӑҫалхи июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне районта растратчиксемпе кооперации пурлӑхне ҫаратакансенчен 152 пин тенкӗ шыраса илмен.

Райпо коллективлӑ ертсе пырассине хакламасть. Уполномоченнӑйсен пухӑвӗсенӗ хутран-ситрен ҫеҫ ирттереҫҫӗ. Ҫавна пула ӗҫсыннисен мӗтӑвӗсене тивӗҫтерес тӗлӗшпе пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Нумай магазинсенче таварсен ассортименчӗ пӗчӗк, хӑшпӗр чухне чылай вӑхӑт хушши халӑха кирлӗ таварсем пулмаҫҫӗ. Чылай суту-илӳ организацийӗсенче ӗҫ дисциплинине пӑсаҫҫӗ, суту-илӳ культурине пӑхӑнса ӗҫлемеҫҫӗ.

Кӗнекесемпе суту-илӳ тӑвасси пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе вара *райпо руководителӗсем* иккӗмӗш вырӑнта *тӑракан ӗҫ вырӑнне хураҫҫӗ. Районти кӗнеке магазинӗ плана уйӑхран-уйӑха тултармасть. Ялсенчи магазинсемпе ларексенче темиҫе ҫул хушши кӗнекесем сутӑнмасӑр йӑтӑнса выртаҫҫӗ;* вӗсене кирлӗ пек йӗркелесе хумаҫҫӗ, кӗнеке витринисем тӑвасси ҫинчен аса та илмеҫҫӗ.

Суту-илӳ организацийӗсем япӑх ӗҫлени вӗсем валли тивӗҫлӗ условисем туса паманнинчен те килет. Чылай магазинсенче хӗллехи вӑхӑтра ӗҫлеме условисем ҫук. Кӑҫал районта чайнӑй ҫуртне ҫӗнӗрен тумалла, тавар складӗ, продуктсем сутакан магазин ҫурчӗсем тумалла, дежурка-магазин уҫмалла. Анчах райпо председателӗ Мадюков юлташ, тӗрлӗ сӑлтавсем тупса, строительство ӗҫне пуҫӑнтармасӑр тӑрать.

Колхозсенче халӗ хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Колхоз ӗҫченӗсемпе механизаторсем ӑнса пулнӑ тыррипе пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртессишӗн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Часах шкулсенче ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланать, унччен шкулсене ачасене йышӑнма хатӗрлесе ҫитермелле. Анчах суту-илӳ организацийӗсем ҫак хӗрӳллӗ тапхӑрта ялти ӗҫсыннисен ыйтӑвне тивӗҫтерме тӑрӑшни курӑнмасть-ха. Упамса, Анат Тӑрмӑш ялӗсенчи магазинсем нумайранпа хупӑ тӑраҫҫӗ. Первомайски ялӗнчи магазин, продавец тупайманнипе, кӑҫал 3 уйӑх хупӑнса тӑчӗ. Ҫӗнӗ продавец Тимофеева растрата тунине пула магазина пӗр уйӑх каялла тепӗр хут хупнӑ. Маленков ячӗпе тӑракан колхоз членӗсен куллен кирлӗ таварсем илме район центрӗнчи магазинсене ҫӳреме тивет. МТС-ри ларек сайра хутра кӑна ӗҫлекелет. Райпо складӗнче шурӑ тӑм пур, вӑл халӗ шкулсене питӗ кирлӗ. Анчах та шурӑ тӑм складрах выртать. Ҫавна пула пурӑ шырама кӳршӗллӗ районсене кайма тивет. Акӑ Анат Тӑрмӑшри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул доска ҫине ҫырмалли пурӑ тата шурӑ тӑм илме Елчӗк районне ҫын янӑ. Чылай ҫӗрте, ҫав шутра район центрӗнчи магазинсенче те, халӑха куллен кирлӗ таварсем ҫителӗклӗ мар.

Райсовет исполкомӗн суту-илӳ пайӗпе райпон суту-илӳ ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелесе ямалла, суту-илӳ работникӗсене шанса панӑ ӗҫшӗн ответлӑха туйма вӗрентсе пымалла.

А. ТУКМАКОВ,
Ф. МАКАРОВ.

Ҫӗнелнӗ Ишекре

Шупашкартан Вӑрнара каякан шоссе ҫулӗпе иртнӗ чухне хулари пек ҫуртйӗрлӗ илемлӗ ял курӑнать. Ку вӑл — Ишек. Ун ҫуммипе Ункӑ шывӗ юхса иртет. Ял варринчи пулӑ кӳлли таврӑлӑха илем кӳрет.

Совет влаҫӗ ҫулӗсенче кунта вӑтам шкул тата хӑлхасӑрсемпе чӗлхесӗрсен шкулӗсем, больница, ветеринарипе зоотехника пункчӗ, ялпо, сыхӑну уйрӑмӗ, промартель, аптека, магазин, клуб, библиотека тата ытти учрежденисем чылай уҫнӑ.

1944 ҫулта туса пӗтернӗ икӗ хутлӑ пысӑк шкулта 560 ҫамрӑк вӗренет. 1953 ҫулта ялта ҫӗнӗ больница лартнӑ. Унта пӗр вӑхӑтрах 50 ҫын сывалма пултарать.

Ял культури ҫулсерен ӳссе пыни Ишек ялповӗ тавар сутнинчен те аван курӑнать. Кӑҫалхи ултӑ уйӑх хушшинче ял ҫыннисем пӗр мотоциклет, 12 велосипед, ултӑ хут купӑс, 23 гитара тата ытти тӗрлӗ культура таварӗсем нумай туяннӑ. Колхозлӑ ял ҫыннисен пурнӑҫӗ ҫулсерен лайӑхланса пырать. Яла 200 экземпляр тӗрлӗрен хаҫат-журнал килсе тӑрать.

Ял сӑн-сӑпачӗ ҫӗнелсе улшӑннишӗн, унӑн ҫыннисен пурнӑҫӗ куллен лайӑхланса пынишӗн колхоз ӗҫченӗсем партипе правительствӑна чӗререн тав тӑваҫҫӗ.

Ф. ОЛАНГИН.

Коллективлӑ договора пурнӑҫланине тӗрӗслерӗҫ

Шупашкарти электроаппаратура заводӗнче 1953 ҫулхи коллективлӑ договора февраль уйӑхӗнче тунӑ. Ҫак договора типографире пичетлеттерсе, кашни рабочие валеҫсе панӑ.

Нумаях пулмасть коллективлӑ договор тӑрӑх илнӗ обязательствӑсене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслерӗҫ. Тӗрӗслеве завком ҫумӗнчи комиссисен членӗсем, активистсем тата администраци представителӗсем хутшӑнчӗҫ.

Завод коллективӗ хӑй обязательствине чыслӑн пурнӑҫласа пырать. Продукци туса кӑлармалли ултӑ уйӑхри плана 112 процент, ӗҫ тухӑҫлӑхӗн планне — 103 процент тултарнӑ, продукцин хӑйне ларакан хакне планра 8,1 процент йӳнетме палӑртнӑ пулсан, 11,27 процент йӳнетнӗ. Завод коллективӗ планран ирттерсе темиҫе миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. Ӗҫсене механизацилес енӗпе илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫланӑ.

Заводра социализмла ӑмӑрту анлӑн саралнӑ. 740 рабочи питӗ паха продукци туса кӑларассишӗн ӑмӑртать. Производствӑра малта пыракан 500 рабочи кашни операцире продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн кӗрешет.

Малта пыракан ӗҫ меслечӗсемпе усӑ курса, нумай рабочисем пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Королевӑпа Мищенко инструментальщицӑсем, Шеронова фрезеровщица, Спасовӑпа Павлов токарьсем, Пегасова, Трофимова, Янчникова прессовщицӑсем тата ыттисем те ӗҫ нормине нумай ирттерсе тултараҫҫӗ, чӗртавар перекетлеҫҫӗ, питӗ лайӑх продукци туса кӑлараҫҫӗ. Довгаль, Кусакин, Павлов, Спасова юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем икӗ квартал хушши ӗнтӗ питӗ лайӑх продукци туса кӑларакан бригада ятне илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Рационализаторсем ҫур ҫулталӑка 182 ҫӗнӳ панӑ. 52 рационализаторла ҫӗнӗве пурнӑҫлани завода ҫулталӑкра 199,9 пин тенкӗ перекетлеме май парать.

1953 ҫул валли тунӑ коллективлӑ договорта ҫамрӑк рабочисен квалификацине ӳстерме кирлине палӑртса хӑварнӑччӗ. Профсоюз организацийӗпе администраци ку енӗпе чылай ӗҫсем туса ирттернӗ. Ҫур ҫул хушшинче 344 рабочи хӑйсен квалификацине ӳстернӗ.

Стахановла шкулсенче производствӑра малта пыракансен опытне сарнӑ. Ҫамрӑк рабочисем нумайӑшӗ каҫхи электромеханически техникумра, ҫамрӑк рабочисен шкулӗнче тата институтра заочно вӗренеҫҫӗ. Вӗренекенсене заводри библиотека пысӑк пулӑшу парать.

Коллективлӑ договорта пурӑнмалли ҫуртсем 1.500 тӑваткал метр чухлӗ лартма палӑртнӑ. Халӗ 20 тата 8 хваттерлӗ пурӑнмалли ҫуртсем туса пӗтереҫҫӗ. Унсӑр пуҫне 36 хваттерлӗ пурӑнмалли ҫурт тата общежити тӑваҫҫӗ.

Профсоюз завкомӗпе завод администрацийӗ харпӑр хӑй валли ҫурт лартакансене пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Ултӑ уйӑх хушшинче вӗсене 380,5 пин тенкӗ кивҫен, строительство материалӗсем, транспорт парса пулӑшнӑ.

Партипе профсоюз организацийӗсем пулӑшнипе администраци производство командирӗсен рольне ӳстерет, кадрсене воспитани парас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттерет.

Орденлӑ завод коллективӗ коллективлӑ договора ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать.

А. АЛЕКСЕЕВ.

ЯЛХУҪАЛӐХ ПРОДУКЧӖСЕМ ПАРАҪҪӖ

ЙӖПРЕҪ. «Путиловка» колхоз государствӑна ҫак ҫулшӑн аш-какай, хӑяр памалли плана ирттерсе тултарчӗ. Сывӑх кунсенчех сӗт-ҫу, ҫӑмарта, ҫӑм тата купӑста парса татать, йӗтӗн сӳсӗпе вӑррине тата махорка пама тытӑнать.

И. МАКСИМОВ.

Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхри стахановецсем

Пилӗкҫуллӑх нормӑна виҫӗ ҫулта пурнӑҫланӑ

Тӑватӑ ҫул ӗҫлетӗп эпӗ ҫуртсем тӑвакан заводра. Ӗҫри юлташсем кӗске вӑхӑтрах лайӑх квалификаци илме пулӑшрӗҫ мана. Эпӗ, хресчен ҫемйинче ӳснӗ хӗрача, халӗ пиллӗкмӗш разрядри станочница.

Эпӗ ӗҫлекен станока вертикаллӗ сверло теҫҫӗ. Унпа ҫурт-йӗре илемлетмелли тата ытти япаласем те тӑваҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра эпӗ кабель чӗркемелли барабан ҫаврашкисене туса кӑларатӑп.

Столярсем пирӗ янатса сыпӑҫтарнӑ хӑмасен тӑваткал таткисене парса тӑраҫҫӗ. Эпир ӗҫри юлташпа Вера Лобаевӑпа ҫав тӑваткалсене касса шӑтарса, пӗр пек ҫаврашкасем тӑватпӑр. Сменӑри норма тӑрӑх бригадӑн 100 ҫаврашкаран кая мар тумалла. Эпир ҫак нормӑна 2—2,5 хут ирттерсе тултаратпӑр.

Ӗҫри ӳсӗмӗн тупсӑмӗ мӗнре-ха?

Чи малтанах, пирӗн, совет рабочийӗсен, ӑнланулӑхӗнче. Эпир ҫутӑ малашлӑхшӑн — коммунизмшӑн ӗҫлетпӗр. Коммунизма кӳсмалли условисенчен пӗри вӑл ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерни пулать, тенӗ Владимир Ильич. Пирӗн таса та тӳрӗ кӑмӑл — тухӑҫлӑ ӗҫлесси, Тӑван ҫӗршыва ытларах усӑ кӳресси.

Анчах ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме пӗр кӑмӑл пурри кӑна сахал-ха. Унсӑр пуҫне хальхи кӑткӑс техникӑна вӗренни, унпа ӑста ӗҫлеме пӗлни кирлӗ. ФЗО шкулне пӗтернӗ Зоя Ельникова, цех механикӗ С. Казаков ӗҫре мана чылай пулӑшрӗҫ. Казаков юлташ сӗннипе ҫаврашкасене малтанхи пек пӑчкӑпа мар, станокпах касма пуҫларӑмӑр. Ҫакӑ вара вӑхӑта перекетлеме, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме май пачӗ.

Пирӗн задача — станока татти-сыпписӗр ӗҫлеттересси, кашни минутпа усӑ курасси. Вертикаллӗ сверлопа эпӗ кӑна ӗҫлетӗп, ҫавӑнпа та уншӑн пӗтӗмпех эпӗ ответлӑ. Эпӗ хамӑн ӗҫ вырӑнӗпе станока типтерлӗ тытма тӑрӑшатӑп. Смена вӗҫленнӗ хыҫҫӑн ӗҫ вырӑнне тасатса, станока ҫу сӗрсе хӑваратӑп. Ӗҫе тытӑниччен кашни инструмента тӗрӗслетӗп, мӑкалнисене хӑйраттаратӑп.

Смена пуҫлансан манӑн пӗтӗм вӑхӑт детальсем тума каять. Кашни утӑм, кашни хускану вырӑнлӑ. Ӗҫе хӑнӑхса ҫитнӗ алӑсем станока пушшӑн ҫаврӑнма памаҫҫӗ, деталь хыҫҫӑн деталь парса тӑраҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне кунран-кун ӳстерсе пырса, эпӗ ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхри нормӑна виҫӗ ҫултах тултартӑм. Хӑвӑрт та пахалӑхлӑ ӗҫлекенӗшӗн мана *столярнӑй цехри чи лайӑх станочница* ятне пачӗҫ, хисеп хӑми ҫине кӗртрӗҫ. Вырӑнти Советсен иртнӗ суйлавӗнче мана *Куславкка поселок* Совечӗн депутатне суйласа хисеп турӗҫ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли тепӗр лайӑх мел вӑл — социализмла ӑмӑрту. Ӑмӑрту юлса пыракансене малта пыракансемпе танлаштарма, пӗтӗмӗшле ҫитӗнӳ тума пулӑшать. Манӑн бригада цехри чи лайӑх ӗҫлекен бригадӑсемпе ӑмӑртать. Эпир июньпе июль уйӑхӗсенче малти рете тухрӑмӑр.

Сӑмах майӗн ҫакна каласа хӑвармалла. Профсоюз завкомӗ социализмла ӑмӑртӑвӑн уйӑхри итогӗсене кая юлса тӑвать. Уйӑхри итогсем ҫинчен уйӑх иртнӗ хыҫҫӑн 15—20 кунтан тин пӗлетпӗр. Ҫакӑ вӑл ӑмӑрту пӗлтерӗшӗпе вӑйне чакарать. Завком председателӗ Б. Иванов юлташӑн ҫак ҫитменлӗхе пӗтермелле.

Партипе правительство совет ҫыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ. Государство паракан укҫа-тенкӗпе пирӗн заводра ӗҫлекенсем валли пурӑнмалли ҫуртсем, культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем лартаҫҫӗ. Кӑҫал та вунӑшар рабочисен ҫемйисем ҫӗнӗ те ҫутӑ хваттерсене пурӑнма кӳҫрӗҫ.

Партипе правительство ӗҫсыннисен ырлӑхӗпе телейӗшӗн куллен тӑрӑшнишӗн савӑнса, шахтерсемпе нефтяниксем валли пурӑнмалли ҫуртсем ытларх туса кӑларма тӑрӑшатпӑр эпир.

Н. БЕЛОВА,
Куславккари ҫуртсем тӑвакан заводри стахановка.

Редакцие килнӗ ҫыру

Ӗҫ дисциплини ҫитеӗксӗр

Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнчи Чернореченск автоҫул (начальникӗ Осипов юлташ) йывӑҫ турттарса кӑлармалли плана кварталтан-квартала тултарса пыраймасть. Ҫавна пула вӑрманпромхоз государство умӗнче пысӑк парӑма кӗчӗ: кӑҫалхи ултӑ уйӑх хушшинче ҫӗршыва ӗҫе юрӑхлӑ йывӑҫ 26 пин кубометр парса ҫитереймерӗ. Автоҫул иккӗмӗш квартал планне 38 процент кӑна тултарчӗ.

Автоҫул начальникӗ Осипов юлташ плана тултарайманнине тӗрлӗ сӑлтавсемпе ӑнлантарма тӑрӑшать. Чи малтанах вӑл ҫанталӑка «ятлать»: пӗрмай ҫумӑр ҫунипе автомашинӑсем йӗркеллӗ ҫӳреймеҫҫӗ, тет. Ҫак сӑмахсем пачах тӗрӗс мар.

Акӑ, июнь уйӑхӗнче ҫанталӑк аван тӑчӗ. Ун чухне ҫумӑр час-часах ҫуман пулин те, йывӑҫ турттарса кӑлармалли уйӑхри плана 48 процент кӑна тултарнӑ. План тӑрӑх кунне 475 кубометр йывӑҫ турттармалла пулсан, аран-аран 300-шер кубометр турттарса кӑларнӑ.

Автоҫул плана тултарайманни рабочисем хушшинче дисциплина япӑхнинчен, автомашинӑсемпе тухӑҫлӑн ӗҫлеменнинчен килет. Автоҫул ҫинче 50 шофер шутланать. Июнь уйӑхӗнче вӗсенчен 4-шӗ кӑна 26 ӗҫ кунӗ ӗҫленӗ. Ыттисем вара 20 кун е унтан та сахалтарах ӗҫленӗ. Июнь уйӑхӗнче шоферсен, пӗтӗмӗшпе илсен, 1.300 кун ӗҫлемелле пулнӑ пулсан, мӗн пурӗ те 715 кун ӗҫленӗ. Ытти кунсенче шоферсем ӗҫе хутшӑнман, автомашинӑсем ахаль ларнӑ е вӗсемпе урӑх ӗҫре усӑ курнӑ. Ивановпа Новиков шоферсем йывӑҫ турттарас вырӑнне, укҫалла урӑх ӗҫсем туса ҫӳренӗ. Грузчиксем хушшинче те дисциплина ҫитеӗксӗр.

Ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес, виҫҫӗмӗш квартал планне тултарас тӗлӗшпе халӗ пӗтӗм вӑйпа кӗрешмелле. Анчах кунта плана тултарассишӗн пӗтӗм ответлӑха туйни ҫук. Виҫҫӗмӗш квартал планне июль уйӑхӗнче 25 процент кӑна тултарнӑ. Хӑвӑртлӑх малашне те ҫавӑн пекех пӗчӗк пулсан, квартал планне тултарас пирки иккӗленме тивет.

Автоҫул ҫинче лайӑх ӗҫлекен шоферсем те пур. Акӑ, Погодов, Цыганов, Кутузов юлташсем яланах лайӑх тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсен опычӗ ыттисемшӗн питӗ усӑллӑ пулмалла. Апла пулин те, автоҫул руководителӗсем малта пыракансен опытне ытти шоферсем хушшинче сарма, социализмла ӑмӑртӑва тивӗҫлипе йӗркелеме тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхшӗн парторганизаци секретарӗ Синев юлташ та айӑплӑ.

И. ТИХОНОВ.

Гастрольсем хыҫҫӑн

Чӑваш государство академи театрӗн коллективӗ ҫуллахи гастрольсене вӗҫлесе, ҫак кунсенче Шупашкара таврӑнчӗ. Театр коллективӗ кӑҫал гастрольре «Айдар», «Виҫӗ туй», «Назар Стодоля» спектакльсене кӑтартрӗ. Виҫӗ уйӑх хушшинче пурӗ 174 спектакль кӑтартнӑ, ҫак спектакльсене 30 пин ҫын курнӑ.

Театр коллективӗн пӗр ушкӑнӗ, Чӑваш республикин халӑх артисчӗ А. К. Ургалкин ертсе пынипе, П. Н. Осиповӑн «Айдар» пьесине Етӗрне, Советски, Улатӑр, Первомайски, Вӑрнар, Калинино, Канаш, Тӑвай, Чкаловски, Комсомольски районӗсенче тата Тутар республикинче *Ульяновск облаҫӗнчи чӑваш ялӗсенче кӑтартрӗ.* Куракансем артистсене ҫур ҫӗрте те ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ, спектакльсене юратса пӑхрӗҫ. Коллектив «Айдар» спектакле, вырӑс халӑхне чӑваш театр искусствипе паллаштарас майпа, вырӑс ялӗсенче вырӑсла выляса пачӗ.

Артистсен тепӗр ушкӑнӗ Тутар тата Пушкӑрт республикисенче, Куйбышевпа Ульяновск облаҫӗсенче пулчӗ. Асӑннӑ республикӑсемпе облаҫсене кӑҫалхипе виҫҫӗмӗш ҫул кайса килнӗ. Иртнӗ ҫулсенче «Нарспи», «Сеньккер кӳлӗ», «Айдар» спектакльсене кӑтартнӑ пулсан, кӑҫал Аркадий Эсхель ҫырнӑ «Виҫӗ туй» ятлӑ музыкӑлла комеди тата Тарас Шевченко ҫырнӑ «Назар Стодоля» ятлӑ музыкӑлла драмӑна кӑтартнӑ. Куракансем артистсем вылянине питех те килӗштерсе, юратса пӑхрӗҫ.

Коллектив колхозсенче ҫеҫ мар, пысӑк хуласенче те спектакльсем лартса пачӗ. «Назар Стодоля» спектакле Бугуруслан, Стерлитамак, Бугульма хулисенче лайӑх йышӑнчӗҫ.

Бугульмара пӗрре вылянӑ хыҫҫӑн иккӗмӗш хут чӗнсе илсе вылятарчӗҫ. Артистсем хавхаланса выляреҫ. Спектакльсем куллен лайӑхланса пычӗҫ.

Куракансем Чӑваш республикинче промышленноҫпа ялхуҫалӑх, культура мӗнле ӳсни ҫинчен нумай ыйтаҫҫӗ. Малта пыракан колхозсем мӗнле ӗҫленипе интересленеҫҫӗ, чӑваш литератури ҫинчен, писательсем, поэтсем мӗнле произведенисем ҫырни ҫинчен те нумай ыйтаҫҫӗ. «Ялав» журналпа «Тӑван Атӑл» альманаха лайӑхрах хут ҫине илемлӗрех кӑларма ҫук-ши теҫҫӗ. «Ялав» журналта тухакан репродукцисем питӗ начар, теҫҫӗ. Пуринчен ытла чӑвашла пьесӑсем ҫук пирки пӑшӑрханаҫҫӗ.

Ку ушкӑнри артистсем лартнӑ спектакльсем тата артистсем ҫинчен хаҫатсем ҫине те нумай ҫырчӗҫ.

Анчах та гастрольсенче ҫитменлӗхсем те пулчӗҫ. Вӑл ҫитменлӗхсенчен чи пысӑкки театр репертуарӗнче паянхи куна кӑтартса паракан спектакльсем сахалли пулса тӑрать. Тӑван республикӑсене кайнӑ ушкӑн «Виҫӗ туй» спектакль лартнӑ пулсан, «Айдар» спектакль лартнӑ ушкӑн ҫак спектакльсӑр пуҫне урӑх пӗр пьеса та лартман. Ӗҫсыннисем паянхи куна, паянхи пурнӑҫа кӑтартакан спектакльсем кӗтеҫҫӗ. Куракансем «Айдар» пьесӑна килӗштерсе пӑхаҫҫӗ, анчах кашни ҫулах пӗр пьесӑнах лартса пани йӑлӑхтарать. Вӗсем ҫӗнӗ пьесӑсем курасшӑн. Артистсем те ҫӗнӗ пьесӑсенчи ҫӗнӗ рольсене вылясшӑн.

Гастрольсем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн, театр коллективӗ канма кайрӗ. Каннӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ сезона уҫма хатӗрленет. Ҫӗнӗ сезонра чи малтанах Горький ҫырнӑ «Мещане», Мюфке ҫырнӑ «Завтра будет нашим» тата Л. Родионов ҫырнӑ «Юратнӑ хӗр» пьесӑсене кӑтартма палӑртнӑ.

Л. РОДИОНОВ,
Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ.

Хастарлӑ механизаторсем

Кӗрхи тулӑ пусси ҫумне тӑваткӑл ещӗк лартнӑ лав пырса чарӑнчӗ. Лавҫӑ Николай Андреев урапа ҫинчен анса ҫӗрелле усӑннӑ пучаха татса илчӗ. Вара, пӗшкӗнсе ларса, тулӑ пӗрчисене картус ӑшне шӗкӗлчесе шутлама пуҫларӗ.

— Пӗр пучахра утмӑл пӗрчӗ, — пӗлтерчӗ вӑл хӑйӗнчен каярах ҫитнӗ лавҫа.

— Гектартан миҫе центнер тухӗ-ши? — интересленсех ыйтма пуҫларӗ ҫамрӑк лавҫӑ.

— Ырӑш вунпилӗкшер центнер тухрӗ. Тулӑ пӗрчисем шултӑрарах, вунсаккӑр та тухма пултарать, — тулӑ пӗрчине шӑлпа ҫыртса пӑхрӗ Андреев.

— Апла кӑҫал тулӑ кулачи ҫиетпӗр.

— Кулач пулсан санӑн туйӑнта сикме те хавасрах, — хӑйпе калаҫакан вунпилӗк ҫулхи йӗкӗте тӑрӑхлама пуҫларӗ Андреев.

Йӗкӗт вӑтанчӗ пулмалла, хӗрелсе кайрӗ те, калаҫма пӑрахрӗ.

Вӗсем калаҫкаласа тӑнӑ вӑхӑтра хире тата тӑватӑ лав тухрӗ. Андреев кашни лав ҫинчи ещӗке тӗрӗслерӗ. Тырӑ тултарас умӗн ещӗк тӗпне михӗ сарма хушрӗ. Кам хӑш вӑхӑтра апат ҫине каясси, лашине кантарасси ҫинчен пӗлтерчӗ. Лаша кантӑрнӑ вӑхӑтра урапана тикӗтлемелине астутарчӗ. Ырӑш пусси енчен самоходнӑй комбайн килнине курсан, тырӑ турттарма уйӑрнӑ лавсем хатӗррине пӗлтерме васкарӗ.

Комбайн тавра пӗр ҫамрӑк ҫын вӗтелесе ҫӳрет. Вӑл кӑшт хулӑнланма пуҫланӑ сассипе хӑй пекех ҫамрӑксене кам ӑҫта ӗҫлемеллине каласа ӑнлантарать. Ҫамрӑксем унӑн сӑмахне хӑлхана тӑратсах тӑнлаҫҫӗ.

— Ыран ҫак лаптӑкри вӑтӑр виҫӗ гектар тулла вырса пӗтермелле. Сывлӑмӳкмесен ҫӗрӗпе выратпӑр. Астӑвӑр, — терӗ вӑл.

— Астӑватпӑр! — илтӗнче ҫамрӑксен сасси.

Ҫамрӑк ҫын пусма тӑрӑх улӑхса комбайна ӗҫе яма пуҫласан, Андреев унпа калаҫма шутламарӗ. «Ку машина патӗнче ҫӳресе вараланса пӗтнӗ ача кӑна-ха. Комбайнерӗ е унӑн помощникӗ ӑҫтарахши?» шухӑшларӗ вӑл ӑшӗнче. Комбайн кӗрлесе малалла кайма пуҫласан тӳссе тӑраймарӗ, хӑй мӗншӗн килни ҫинчен пӗлтерме шутларӗ. Анчах ҫамрӑк ҫын комбайна чарса тӑмарӗ, кӑчӑк туртса штурвал площадки ҫине улӑхма хушрӗ.

— Комбайнер ӑҫта? — ыйтрӗ Андреев.

— Николай Никитич ыраш пуссине бензин кӳсарса килме юлчӗ. Эсир мӗн ыйтупаччӗ?

Андреев хӑй мӗншӗн килнине пӗлтерчӗ.

— Мӗнле сирӗн колхозра пӗр бригада участокӗнчен тепӗрин ҫине куҫсанах комбайн патӗнче ӗҫлекенсемпе тырӑ турттаракансем улшӑнаҫҫӗ? Капла юрамасть, — Андреев енчелле пӑхмасӑрах каларӗ ҫамрӑк ҫын.

— Бригадирсем улӑштараҫҫӗ те, пирӗн мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ? — сарӑ майӑхне пӗтӗркелесе илчӗ Андреев.

— Ялан пӗр ҫынсем ӗҫлени хӑвӑра лайӑх... Пӗлтӗр эпӗ хамӑрӑн «Мотор» колхозра тырӑ вырса пӗтеричченех самоходка хыҫӗнче улӑм купаланӑ ҫӗрте ӗҫлерӗм. Ҫав вӑхӑтрах комбайнпа паллашрӑм. Халӗ, акӑ, хӑвӑрах куратӑр, комбайнер помощникӗ пулса ӗҫлетӗп.

— Миҫере эсӗ, ачам? — ҫамрӑк ҫын комбайнер помощникӗнче ӗҫленинчен тӗлӗнсе ыйтрӗ Андреев.

— Ятна та пӗлем-ха тата...

— Анатолий Иванов.

— Вунултта кайнӑ.

Андреев текех калаҫса кансӗрлесшӗн пулмарӗ. Бункер ҫумӗнчи инструментсемпе запас пайсем хуракан ещӗк ҫине ларса Иванов мӗнле ӗҫленине сӑнама пуҫларӗ.

«Кур-ха эсӗ, епле лайӑх ӗҫлет?» — тӗлӗнсе пӑхса пычӗ вӑл.

Анатолий Иванов чӑнах та комбайна лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. Унӑн аллисем пӗр минут та пушӑ тӑмаҫҫӗ. Скоростьсене вӑл хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхмасӑрах лартать. Тулӑ кӑшт сайрарах вырӑна ҫитсен комбайна ҫийӗнчех виҫҫӗмӗш хӑвӑртлӑхпа ярать. Ырӑш пекех ҫӳлӗ те ҫӑра тулӑ йывӑр пучахсене ҫӗклесе ларайимасӑр выртнӑ. Кун пек вырӑнта Анатолий комбайна ерипен пыртарать. Хедера ҫӗр ҫумне ҫитичченех антарса вырать. Шнек ҫине улӑм капланса пӗр вырӑнта ӗҫлеттерсе тӑрать е, вӑрӑм патак тытса, улӑма транспортер патне хӑвӑртрах шуса пыма пулӑшать. Хедера сарлакӑшпех касгарса пыма тӑрӑшать.

Андреев ҫамрӑк комбайнерӑн ӗҫӗнче кӑлтӑксем тупасшӑн. Анчах тем вӑхӑт пӑхса пырсан та ҫӗрте пучахсем выртса юлнине кураймарӗ. Комбайн ҫапса кӑларакан улӑмпа пӗрле тулӑ пӗрчисем тухни туйӑнмарӗ.

Сичӗ ҫул вӗренмелли шкул пӗтерсен Анатолий Иванов комсомолецӑн тем ӗҫе те кӗрес килнӗ. Чугун ҫул тӑрӑх поездсем ҫӳренине курсан, вӑл пӑравус машинисчӗ пулма шутланӑ. Ял урлӑ самолет вӗҫсе иртсен кунӗ-кунӗпе летчик пулассиҫинчен шухӑшласа ҫӳренӗ. Ял варринчи аслӑ ҫул тусане вӗҫтерсе чупакан автомашинӑсене курсан, шофер пуласси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Колхоза килнӗ агроном бригадирсене ӗҫлӗ канашсем панине илтсен, Анатолин ялхуҫалӑх техникумне каясси килнӗ.

Пӗлтӗр Анатолисен ялӗнчи «Мотор» колхозра комбайнпа тырӑ вырма Николай Никитич Павлов комсомолец килнӗ. Вӑл килсен Анатолий кунӗ-кунӗпе комбайн патӗнче ҫӳреме пуҫланӑ: комбайнера тӗрлӗ инструментсем илсе панӑ, комбайн пайӗсем ҫинчен ыйтса тӗпченӗ.

— Комбайнер пулас килет-и мӗн? — ыйтнӑ Павлов пурне те пӗлесшӗн хыпса ҫунакан Анатолирен.

Анатолий хӑйӗн шухӑшне пӗр пытармасӑр каласа кӑтартнӑ.

— Апла санӑн тырӑ вырнӑ чухне комбайн агрегачӗнче ӗҫлемелле. Комбайна пӗлсен шофера е летчика вӗренме те ҫӑмӑл пулать.

— Бригадирсем чармасан ӗҫлесчӗ те, — тенӗ Анатолий.

Павлов ыйтнипе колхоз правленийӗ Анатолие тырӑ вырса пӗтеричченех комбайн агрегачӗнче ӗҫлеме хушнӑ.

Анатолий комбайн ҫапса кӑларакан улӑма купаласа пынӑ. Ҫав вӑхӑтрах комбайнпа ӗҫлеме те вӗреннӗ. Каярахпа Павлов ӑна штурвал тытса пыма та шанакан пулнӑ.

— Эпир иксӗмӗр кӑҫал тӑватҫӗр аллӑ гектар тырӑ вырса МТС-ра малти вырӑна тухрӑмӑр, — тырӑ вырса пӗтерсен пӗлтернӗ Павлов.

— Килес ҫул каллех пирӗн колхоза кил, — тенӗ Анатолий.

— Канашри механизаторсен шкулне вӗренме кӗр. Вара яланах пӗрле ӗҫлӗпӗр, — хавхалантарнӑ Павлов.

— Ҫамрӑк тесе илмӗҫ ҫав, — иккӗленнӗ Анатолий.

Вӑл иккӗленни ахалех пулнӑ. Суркунне Анатолий Иванов механизаторсен шкулӗнчен лайӑх вӗренсе тухнӑ. Ҫавах ӑна хӑватлӑ трактор шанса парасшӑн пулман. Вӗреннӗ ҫынна МТС-ран вӗсертес мар тесе кӑна «ХТЗ-7» тракторпа ӗҫлеме сӗннӗ. Анчах хӑватлӑ техника ҫинчен ӗмӗтленсе пурӑнакан комсомолец пӗчӗк трактор ҫине ларма килӗшмен. Вара хӑйӗн ирӗкӗпе «ДТ-54» тракторӑн плугарӗ пулса ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫӗртме туса пӗтерсен самоходнӑй комбайна юсама пуҫланӑ. Халӗ, акӑ Павлов комбайнер помощникӗ пулса ӗҫлет.

Комбайн участок тавра ҫаврӑнса килчӗ. Лавҫӑсем бункерти тырра витнӗ итем ҫине турттарса кайрӗҫ. Тырра ҫийӗнчех сӑвӑрса тасатса государствӑна пама илсе каяҫҫӗ. Комбайн пулӑшнипе ӗнтӗ кӑҫал «Красное пламя» колхоз государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе малта пырать.

Комбайн ҫинче ларса пынӑ Андреев хӑйӗн лавӗ ҫине тырӑ тултарса ӗлкӗреймерӗ. Унӑн ирӗксӗрех тата икӗ лавпа пӗрле комбайн тепӗр ҫаврӑнса килессе кӗтмелле пулчӗ.

Пӑртак тӑрсан бензин тиенӗ лавсемпе Павлов комбайнер килсе ҫитрӗ. Лавҫӑсем ҫийӗнчех шӑтӑк чавса бензин пичкисене вырнаҫтарса лартрӗҫ.

— Ну, чаплӑ ӗҫлет иккен санӑн помощник, — терӗ Андреев, пичке лартнӑ шӑтӑка ҫулҫӑллӑ туратсемпе витсе пӗтерсен.

— Аптрамасть. Ултӑ кун хушшинче ҫӗр вунвиҫӗ гектар выртӑмӑр. Комбайн чарӑнса тӑни пулман-ха.

— Тата миҫе гектар вырса паратӑр?

— Пӗтӗмпе тӑватҫӗр аллӑ гектар вырса парасшӑн. Теп, ытларах та вырӑпӑр. Пӗлтӗр кӗрхи тырӑ утмӑл гектар кӑна вырма ӗлкӗрнӗччӗ. Кӑҫал ҫӗраллӑ гектара яхӑн пулать. Суртырри ҫине куҫсан вырма ҫӑмӑлтарах.

— Колхоз инсӗмкунхи пек бензинпа шыв турттармасӑр чӑрмантармасан пиллӗкҫӗр гектар та вырса парӑпӑр.

Комбайн каллех участок тавра ҫаврӑнса ситрӗ. Андреев ытӑн пек сарӑ тулӑ тиенӗ лавне итем енне тытрӗ. Павлов комбайнер Анатолий вырӑнне тӑрса вырма пуҫларӗ.

Канаш МТС-че малта пыракан комбайнер Николай Никитич Павлов хӑйӗн помощникӗнчен виҫӗ ҫул кӑна аслӑрах. Пӗринче вӑл механизаторсене хӑйӗн опычӗ ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Павлов комбайна ҫав тери лайӑх пӗлнинчен тӗлӗннӗ ҫынсем вӑл хӑҫан ӗҫлеме пуҫланине пӗлесшӗн пулнӑ.

— Тӑхӑр ҫула ҫитсен, — ответленӗ Павлов.

Пӗлмен ҫынсем Павлов шӳт тӑвать тесе ӑнланнӑ. Анчах вӑл тӗрӗссине каланӑ. Унӑн ашшӗ республикӑри вӑтӑ комбайнерсенчен пӗри. Вӑл хӑйӗн ывӑлне, Кольӑна, тӑхӑр ҫула ҫитсенех комбайнпа вырнӑ ҫӗре илсе ҫӳреме пуҫланӑ. Ҫапла Коля ҫамрӑкранах комбайна вӗренсе ӳснӗ. Вунтӑватӑ ҫула ҫитсен ашшӗне пулӑшса вырма тытӑннӑ. Каярахпа механизаторсен шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ. Ун хыҫҫӑн курсра вӗренсе механик-комбайнер ятне илнӗ. Кӑҫалхипе иккӗмӗш ҫул комбайнер пулса ӗҫлет.

МТС енчен ремонт тумалли хатӗрсем илсе ҫӳрекен автомашина килсе «Молния» хаҫат парса хӑварчӗ. Анатолий Иванов ӑна хыпаланса вуласа тухрӗ те, тулӑ пуссипе карап пек килекен комбайна хирӗҫ чупрӗ.

— Николай Никитич, эсӗ асуптан иртсе кайнӑ! — кӑшкӑрса пычӗ вӑл чупнӑ май.

Николай Павловӑн ашшӗ Никита Павлович Уҫырмари «Комбайн» колхозра «С-6» комбайнпа вырать. Ашшӗпе ывӑлӗ пӗр-пӗрипе ӑмӑртаҫҫӗ. Николай Павлов ашшӗнчен икӗ хут ытларах вырса МТС-ра мала тухнӑ. Ҫавӑн ҫинчен ҫырнӑ «Молния» хаҫатра. Ун ҫинчен пӗлтерме васкаса чупрӗ ӗнтӗ Анатолий Иванов Николай Павлов комбайнер патне.

Павел ЩИПЦОВ.
«Красное пламя» колхоз,
Канаш районӗ.

Корейӑна Совет Ҫарӗ ирӗке кӑларнӑранпа 8 ҫул тултарни

Пхеньянри савӑнӑҫлӑ лару

ПХЕНЬЯН, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер каҫхине Пхеньянра Совет Ҫарӗ Корейӑна Япони пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑранпа 8 ҫул тултарнӑ ятпа савӑнӑҫлӑ лару пулса иртнӗ. Ларӑва партипе общественӑлла организацисен представителӗсем, производствӑра малта пыракансем, служащисем, ҫывӑх илсенчи хресченсем, наукӑпа искусство работникӗсем пухӑннӑ. Ларура ҫавӑн пекех ССР Союзӗн Демократиллӗ Корея Халӑх Республикинчи посолӗ Суздалев юлташ, Китай Халӑх Республикипе халӑх демократи ҫӗршывӗсен дипломатилле представителӗсем пулнӑ.

Президиум сӗтелӗ хушшине Ким Ир Сен, Ким Ду Бон, Пак Ден Ай, Пак Чен Ок тата Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин правительствипе Ӗҫлӗх партийӗн ытти руководителӗсем тухаҫҫӗ. Вӗсене пурте тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

Корейӑна Совет ҫарӗ ирӗке кӑларнӑранпа 8 ҫул тултарни ҫинчен Корейӑри Ӗҫлӗх партийӗн Центральнӑй Комитечӗн председателӗн заместителӗ Пак Чен Ок доклад тунӑ.

Докладчик, уйрӑммӑн илсен, Корейӑра перемири туни мӗнпур мирпе демократи лагерӗ тунӑ ҫитӗнӳ пулнине палӑртнӑ.

Пак Чен Ок Корея халӑхӗ умӗнче халӑх хуҫалӑхне юсас тата ҫӗршыва мирлӗн пӗрлештерес тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑнӑ. Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗнче Совет правительстви Демократиллӗ Корея Халӑх Республикине пулӑшу памалла туни ҫинчен каланине аса илтерсе, докладчик ҫапла каланӑ:

— Паян пӗтӗм Корея халӑхӗ аслӑ совет халӑхне—хӑйне ирӗке кӑларакана тата хӳтӗлекене, Совет правительствине тав тӑвать.

Корея халӑхӗ ячӗпе Пак Чен Ок ҫавӑн пекех аслӑ Китай халӑхне тата халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи халӑхсене тав тунӑ.

Ларура ССР Союзӗн Демократиллӗ Корея Халӑх Республикинчи посолӗ Суздалев юлташ саламлӑ сӑмах тухса каланӑ.

США-па Ли Сын Ман хушшинче ҫар договорӗ тунине хирӗҫ панӑ протест

ПХЕНЬЯН, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Августӑн 13-мӗшӗнче Корейӑри пӗрлӗхлӗ демократиллӗ отечественнӑй фронтӑн Центральнӑй Комитечӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Лару Даллеспа Ли Сын Ман хушшинче тунӑ ҫар договорне хирӗҫлесе заявлени йышӑннӑ.

Корейӑра перемири тунӑ хыҫҫӑн тата Корея ыйтӑвне политикӑлла конференцире мирлӗн татса парас ыйтӑва пӑхса тухас умӗн «Корейӑпа Америка хушшинче пӗр-пӗрне хӳтӗлесси ҫинчен» тунӑ договор мӗнле тӗллев тытать-ха?—тенӗ заявленире. Унӑн тӗллевӗ Америка ҫарӗсене Кӑнтӑр Корейӑра нумай вӑхӑт хушши тытса тӑмалла тӑвасси, пирӗн тӑван ҫӗршывӑн кӑнтӑр пайӗнче Америка ҫар бази туса хурасси, Корейӑн шалти ӗҫне США хутшӑнассине законлӑ йӗрке тӑвасси пулать. Америка империалисчӗсен ҫакнашкал шухӑшӗ вӑл Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче кӑна мар тата пӗтӗм тӗнчере мир ӗҫне хӑратса тӑрать. Корейӑри пӗрлӗхлӗ демократиллӗ отечественнӑй фронтӑн Центральнӑй Комитечӗ, пӗтӗм Корея халӑхӗпе пӗрле, Ли Сын Манпа США хушшинчи договора татӑклӑн сивлет, ӑна тунине хирӗҫ протестлет.

Корея халӑхӗ пӗрлӗхлӗ, тенӗ заявленире. Корея ҫӗршывӗн хуҫи—Корея халӑхӗ. Корея ыйтӑвне корейцсен татса памалла. Корейӑна мирлӗ майпа пӗрлештермелле.

Корейӑри пӗрлӗхлӗ демократиллӗ отечественнӑй фронтӑн Центральнӑй Комитечӗ корейцсемпе корейцсем хушшинчи вӑрҫа хирӗҫ тӑракан тата Корейӑна мирлӗн пӗрлештерессишӗн тӑракан Кӑнтӑр Корейӑри мӗнпур партисемпе обществӑлла организацисене Корейӑри пӗрлӗхлӗ демократиллӗ отечественнӑй фронт тавра пӗтӗҫме, «Корейӑпа Америка хушшинче пӗр-пӗрне хӳтӗлесси ҫинчен» тунӑ договора сирсе пӑрахма чӗнет.

Ҫамрӑксемпе студентсен пӗтӗм тӗнчери тӑваттӑмӗш фестивалӗнче

БУХАРЕСТ, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫамрӑксемпе студентсен пӗтӗм тӗнчери тӑваттӑмӗш фестивалӗнче юлташла спорт ӑмӑртӑвӗсем вӗҫленнӗ.

Совет спортсменӗсем фестивальре 333 медаль илнӗ. Вӑл шутран ылтӑн медальсем 202, кӗмӗл медальсем 72, бронза медальсем 59.

БУХАРЕСТ, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Паян августӑн 23-мӗшӗ ячӗпе тӑракан стадионра футбол вӑййи тӗлӗшпе юлашки тӗлпулусем пулнӑ.

Ҫӗнтерекенсене хисеплӗ кубоксемпе медальсем панӑ.

Кун хыҫҫӑн ялавсен парачӗ пулнӑ. Трибуна умӗнчен Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн, Студентсен тӗнчери союзӗн ялавӗсене, мир ялавӗсене, спорт вӑййисене хутшӑннӑ ҫӗршывсен ялавӗсене ҫӗклесе иртнӗ.

Парада пухӑннисем умӗнче спорт вӑййисен фестивальне иртterес тӗлӗшпе ӗҫлекен пӗтӗм тӗнчери комисси председателӗ М. Боднараш сӑмах тухса каланӑ. Вӑл мириӗн, туслӑхшӑн тата вӑйлӑрах кӗрешме чӗнсе каланӑ.

М. Боднараш ӑмӑртусем вӗҫленни ҫинчен пӗлтерет. Демократиллӗ ҫамрӑксен гимне каланӑ вӑхӑтра Ҫамрӑксемпе студентсен Пӗтӗм тӗнчери тӑваттӑмӗш фестивалӗнчи спорт вӑййисен ялавне антараҫҫӗ.

Ҫамрӑксемпе студентсен Пӗтӗм тӗнчери тӑваттӑмӗш фестивалӗнче спорт вӑййисем пысӑк ӑнӑҫлӑхпа иртнӗ. Ӑмӑртӑва 54 ҫӗршыври 4.366 спортсмен хутшӑннӑ. Ҫӑмӑл атлетика енӗпе ҫӗршывсемшӗн ҫӗнӗрен 55 рекорд, йывӑр япаласем ҫӗклес тӗлӗшпе 18 рекорд тунӑ.

Плана иртерсе тултарнӑ

КАНАШ. Ҫак кунсенче ремонтпа строительство кантурӗнче ӗҫлекенсен пухӑвӗ иккӗмӗш кварталти ӗҫ итогӗсене пӑхса тухрӗ. Коллектив иккӗмӗш кварталти плана 114 процент тултарнӑ. Чылай рабочисем хӑйсен ӗҫри пӗлӳлӗхне ӳстернӗ.

Уйрӑмах С. Иванов юлташ ертсе пыракан платниксен бригади лайӑх ӗҫленӗ, малти вырӑна тухнӑ. Рабочисем виҫҫӗмӗш кварталти производство планне иртерсе тултарма пулса обязательство илчӗҫ. Ҫавӑн пекех вӗсем кӑҫалхи производство планне срокчен тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва тухрӗҫ.

И. СОЛОВЬЕВ.

Редактор заместителӗ М. Н. ЯКИМОВ.

Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин правительстви йышӑннӑ постановлени

ПХЕНЬЯН, августӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑри тӗп телеграф агентстви ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: Совет правительстви Корея халӑхне ҫӗршыв халӑх хуҫалӑхне юсаса аталантарма пӗр миллиард тенкӗ укҫа парса пулӑшма решени йышӑннӑ май, Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин министрӗсен кабинечӗ постановлени йышӑннӑ.

— Паян, Корея халӑхӗ умӗнче вӑрҫӑ ишӗлтерсе хӑварнӑ халӑх хуҫалӑхне хӑвӑртрах юсаса аталантарас тата хӑйӗн материальнӑй тата культура условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе вӑраха ямасӑр татса памалли задачӑсем тӑнӑ вӑхӑтра, — тенӗ постановленире, — Совет правительстви пирӗн халӑха паракан пысӑк пулӑшу пирӗншӗн ҫӗнӗ вӑйсен ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать, пирӗн халӑха ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарать.

Пӗр миллиард тенкӗ укҫа парса пулӑшнӑшӑн пӗтӗм Корея халӑхӗпе пӗрле аслӑ совет халӑхне чӗререн тав туса, Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин министрӗсен кабинечӗ ҫак укҫапа халӑх хуҫалӑхне юсас, республикӑна малалла индустриализацилемелли никӗс хывас тата Корея халӑхӗн материальнӑй пурнӑҫӗпе культурӑллӑ шайне ӳстерес ӗҫре усӑ курма йышӑнать.

Корея халӑхӗ, тенӗ постановленире, совет халӑхӗпе тытакан тӑванла туслӑха тата ытларах тӗреклетет. Вӑл хӑйӗн халӑх хуҫалӑхне вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта юсаса аталантармалли пысӑк задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлӗ.

Постановлени ҫине Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Министрӗсен кабинечӗн председателӗ Ким Ир Сен 1953 ҫулхи августӑн 12-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

Корейӑпа Китай енӗн гражданскi полицийӗ, демилитаризаци зонинe кӗнӗ

ПЕКИН, августӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран пӗлтернинче ҫапла каланӑ: Корейӑпа Китай енӗ демаркаци линийӗн ҫурҫӗр енчи демилитаризаци зонине гражданскi полици 800 ҫын таран илсе пынӑ. Гражданскi полицин гражданла администрацие пулӑшса тӑмалла тата Корейӑпа Китай енӗн демилитаризаци зонинче йӗрке тытса тӑмалла. Полицие перемири ҫинчен тунӑ килӗшӳ условийӗсем тӑрӑх, ҫавӑн пекех тата перемири тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫар комисси секретарӗсен 11-мӗш ларӑвӗнче тунӑ килӗшӳ тӑрӑх илсе пынӑ.

Америка енӗн гражданскi полицийӗ демилитаризаци зонин кӑнтӑр пайне хӑҫан пырса кӗмеллине ку таранччен палӑртса ҫитереймен-ха.

КОЧЖЕДО УТРАВӖ ҪИНЧЕ ТЫТКӐНРИ ҪАР ҪЫННИСЕМ ҪИНЕ ТАТА КОРЕЙӐПА КИТАЙӐН ХӖРЛӖ ХӖРЕС УШКӐНӖНЧИ ПРЕДСТАВИТЕЛӖСЕМ ҪИНЕ КУҪҪУЛЬ КӐЛАРАКАН ГАЗСЕМ ЯНИ ҪИНЧЕН СИНЬХУА АГЕНТСТВИ ПӖЛТЕРНИ

ПЕКИН, августӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран августӑн 13-мӗшӗнче пӗлтернинче ҫапла каланӑ:

Америкӑн Кочжедо утравӗ ҫинчи тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерьне Хӗрлӗ Хӗресӗн пӗрлехи ушкӑнӗпе пырса ситнӗ Корейӑпа Китай енӗн представителӗсем ҫине августӑн 9-мӗшӗнче куҫҫуль кӑларакан газ янӑ. Хӗрлӗ Хӗрес ушкӑнӗ Кочжедо утравӗ ҫинчи тыткӑнри ҫар ҫыннисен пӗррӗмӗш лагерьне августӑн 6-мӗшӗнче ирхине пырса ситнӗ пулнӑ. Хӗрлӗ Хӗрес ушкӑнӗнчи ҫынсене икӗ рет пралук карта тытса ҫавӑрнӑ барака вырнаҫтарнӑ. Барака Америка ҫар полицийӗ хуралласа тӑнӑ, унтан тухса ҫӳреме чарнӑ пулнӑ.

Августӑн 9-мӗшӗнче ирхине 6 сехет тӗлнелле Хӗрлӗ Хӗрес ушкӑнӗ вырнаҫнӑ ҫуртра сасартӑк куҫҫуль кӑларакан газ йӑсӑрланни курӑннӑ. Корейӑпа Китай енӗн представителӗсем газран сиен курнӑ, вӗсен куҫҫуль юхма тытӑннӑ. Вӗсем ӳсӗрме пуҫланӑ, пӗр сехет хушши сывлӑш ҫитменнипе аптранӑ. Куҫҫуль кӑларакан газа Америка енӗ тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫине янӑ пулнӑ. Газ ярасси ҫинчен Хӗрлӗ Хӗрес ушкӑнӗнчи тепӗр енӗн представителӗсене тата лагерь хуралне малтанах пӗлтерсе хунӑ, ҫавӑнпа та вӗсем противогазсем тӑхӑннӑ.

Корейӑпа Китай енӗн представителӗсем Кочжедо утравӗ ҫине пырса ҫитсенех вӗсем валли утрав ҫинче тӳсме ҫук йывӑр условисем туса хунӑ. Сӑмахран, американецсем Корейӑпа Китай енӗн представителӗсене августӑн 8-мӗшӗнче кӑнтӑрлаччен тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе калаҫма ирӗк паман. Лагерьсенче тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе мӗн ҫинчен калаҫассине вӗсен малтан лагерь начальникне пӗлтерсе хумалла.

Америка енӗ тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсем ҫине газ яни тата тепӗр хут ҫакна кӑтартса парать: Корейӑпа Китай енӗн представителӗсем Америка контролӗнче тӑракан тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсенче пулнӑ чухне хӑйсен миссине йӗркеллӗ пурнӑҫлама пултараймаҫҫӗ.

Корейӑпа Китай енне илес пулсан, вӑл тепӗр енӗн Хӗрлӗ Хӗрес обществисен представителӗсене тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсене пырса ҫӳренӗ чухне хӑйсен ӗҫӗсене пурнӑҫлама лайӑх условисем туса параҫҫӗ.

Тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссире Корейӑпа Китай енӗн представителӗсем панӑ протест

Синьхуа агентстви пӗлтерни

ПЕКИН, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ:

Августӑн 14-мӗшӗнче тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссире Корейӑпа Китай енӗн членӗсем Хӗрлӗ Хӗрес представителӗсене Кӑнтӑр Корейӑри тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсене пырса ҫӳреме кансӗрлес тӗлӗшпе Америка ҫар влаҫӗсем тӑвакан пысӑк чӑрмавсене хирӗҫ татӑклӑ протест панӑ. Ҫак протест пӗтӗм тӗнчене тимлӗн пӑхтарать. Чӑрмавсемпе пӳлӳсен ытла та йывӑрланса ситнӗ пирки, Корейӑпа Китайӑн Хӗрлӗ Хӗрес делегачӗсем перемири ҫинчен тунӑ килӗшӳсенче палӑртнӑ пек хӑйсен ӗҫӗсене текех пурнӑҫлама пултараймаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Хӗрес отрячӗсене кӗрекен Корейӑпа Китай членӗсем икӗ рет пралук карта тытса ҫавӑрнӑ ҫуртра вырнаҫнӑ чухне августӑн 9-мӗшӗнче Кочжедо утравӗ ҫинче Америка хуралӗ вӗсем ҫине пӗр сехет хушшине яхӑн куҫҫуль кӑларакан газ ярса тӑнӑ.

Хӗрлӗ Хӗрес представителӗсене тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсене тухса ҫӳреме питех те хытӑ чӑрмантарни Хӗрлӗ Хӗрес представителӗсем пӗлтернинчен те курӑнать.

Пусанра Хӗрлӗ Хӗрес отрядне кӗрекен Корейӑпа Китай членӗсен хӑйсен ӗҫне чарса хартмалла пулнӑ.

Муньсань ҫывӑхӗнче Инчхин ҫывӑхӗ патӗнче вӗсене тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗнче пулма ирӗк паман.

Кондонпора Америка ҫар влаҫӗсем Хӗрлӗ Хӗрес отрячӗсен членӗсен сӑмахӗсене пӑхмасӑр пӗлтернӗ, вӗсен тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе вицӗ кун хушши калаҫма пултарайман.

Кочжедо утравӗ ҫинче Хӗрлӗ Хӗрес отрячӗн членӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене сигаретсем валеҫме тата ҫырусем пама пултарайман. Вӗсене ҫавӑн пекех тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе калаҫусем ирттерме те чарнӑ.

Сурҫӗр Корейӑра вара пачах урӑхла. Хӗрлӗ Хӗресӗн пӗрлехи отрячӗсен членӗсем валли Кэсонра тата Ҫурҫӗр Корейӑри тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсенче лайӑх условисем туса панӑ. Ҫак вырӑнсенче асӑннӑ отрядсен членӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе е вӗсен представителӗсемпе ирӗклӗн калаҫма пултараҫҫӗ, ҫавӑн пекех вӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисем хушшинче парнесем валеҫсе пама пултараҫҫӗ. Вӗсем ҫавӑн пекех пурӑнмалли ҫуртсене, столовӑйсене, медицина пункчӗсене пырса кайма пултараҫҫӗ. Тыткӑнри ҫар ҫыннисем хушшинче калаҫусем ирттерме пултараҫҫӗ.

Сурҫӗр Корейӑра тата Кӑнтӑр Корейӑра Хӗрлӗ Хӗрес отрячӗсем ҫине мӗнле пӑхнинчен тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫине-хӑш енӗ этемле пӑхни лайӑх курӑнать ӗнтӗ.

Кӑнтӑр Корейӑра Хӗрлӗ Хӗрес отрячӗсен членӗсене тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсене пырса ҫӳреме тата хӑйсен ӗҫӗсене пурнӑҫлама ҫавӑн пек хытӑ чӑрмантараҫҫӗ. Юлашки икӗ ҫул ытла вӑхӑт хушшинче «ирӗклӗн репатриаци тӑвас» тӗллевпе Корейӑпа Китай енӗн тыткӑнри ҫар ҫыннисене тискеррӗн асӗрхесе тата амантса пӑтӗрнӗ фактсем тӗнчери общественноҫа паллӑ пулса тӑрасран пытарса тӑрас шутпа ҫавӑн пек чӑрмантараҫҫӗ.

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКА

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Францире забастовка халиччен пекех малалла пырать. Чугун ҫулсем, почта, телеграф, телефон, шахтӑсем, газ заводӗсем, электростанцисем, коммунальнӑй учрежденисем тата предприятисем ӗҫлеме чарӑннӑ. Париж хулинчи транспорт работникӗсем ҫаплах забастовка тӑваҫҫӗ. Металлурги предприятийӗсенче нумайӑшӗнче забастовка пырать. Промышленноҫӑн ҫак отраслӗнчи нумай предприятисенче августӑн 18-мӗшӗнче массӑлла отпусксем илнӗ вӑхӑт пӗтет. Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, отпускран таврӑнакан металлистсем забастовка тӑвакансемпе пӗрлешме хатӗрленеҫҫӗ.

Забастовка вӑйланса пыни тата правительство декречӗсене пӑрахӑҫа кӑларассишӗн, мӗнпур рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫине ӳстерессишӗн кӗрешекен ӗҫ ҫыннисем пӗрлӗхлӗ пулни правительствӑна, ҫавӑн пекех «Форс увриер», «Христианла ӗҫҫыннисен конфедерацийӗн» тата «Кадрсен пӗтӗмӗшле конфедерацийӗн» профсоюзӗсен руководствине питех те пӑшӑрхантарса ӳкернӗ.

Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер кунӗпех пӗр енчен—правительство пуҫлӑхӗ Ланьель, ӗҫ министрӗ Бакон, финанс министрӗ Фэр, тепӗр енчен—«Форс увриер» лидерӗсем Жуо тата Ботеро, католикла профсоюзсен лидерӗсем Буладу тата Левард хушшинче калаҫусем пынӑ. Икӗ профсоюз организацийӗн руководителӗсем правительствӑпа калаҫусем харпӑр хӑй тӗллӗн ирттереҫҫӗ пулсан та, «Журналь дю диманш» хаҫат каланӑ тӑрӑх, профсоюз руководителӗсем пӗр-пӗринпе ялан тачӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ.

Профсоюзсен реакцилле руководстви правительствӑпа хӑй тӗллӗн калаҫу ирттерме тытӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Пӗтӗм Францири ӗҫлев конфедерацийӗ правительствӑпа мӗнпур профсоюзсен пӗрле калаҫу ирттермелле тата правительство умне тӑратма пӗтӗмӗшле программа хатӗрлемелле тесе чӗнсе каланӑ пирки нимӗнле ответ та паман.

Парижри демократилле ушкӑнсем хушшинче ҫапла шутлаҫҫӗ: «Форс увриер» тата христианла ӗҫҫыннисен конфедерацийӗн руководителӗсем правительствӑпа калаҫусем ирттерни вӑл забастовкӑна чарса хартма хӑтланни, ҫапла вара правительство декречӗсене сыхласа хӑварма тӑрӑшни пулать.

Иранри лару-тӑру

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Тегеранран ҫапла пӗлтерет:

Августӑн 15-мӗшӗпе 16-мӗшӗ хушшинче ҫӗрле Иран шахӗ майлӑ тӑракан ҫарсем государство переворочӗ тума хӑтланнӑ. Иранри ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрне Фатемине хупса лартнӑ. Премьер-министрӑн — Мосаддык докторӑн ҫуртӗ ҫине тапӑннӑ.

Августӑн 16-мӗшӗнче ирхине Мосаддык правительстви майлӑ тӑракан ҫарсем йӗрке туса хунӑ. Пӑлхавҫӑсене арестленӗ. Пӑлхавҫӑсем хупса лартнӑ ҫынсене тӗрмерен кӑларнӑ.

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Тегеранран ҫапла пӗлтерет:

Двор министрӗн ӗҫӗсене туса пыракан Аминие арестленӗ.

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Тегеранран ҫапла пӗлтерет:

Государство переворочӗ тума хӑтланни Тегеранра нимӗн чухлӗ те тӗлӗнтермен. Ҫӑнаса тӑракансем вӑл пуласса темиҫе эрне хушши кӗтсе тӑнӑ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен вӗсем Иран шахӗ майлӑ тӑракан ҫар ҫыннисем влаҫа хӑйсен аллине илме хӑтланасса пӗлсе тӑнӑ. «Шаджаат» хаҫат августӑн 15-мӗшӗнче каҫхине ҫӗршывра хатӗрленекен переворот ҫинчен тӗплӗн ҫырса пӗлтернӗ, ҫак кавара Насыри полковник ертсе пыни ҫинчен ҫырнӑ. Хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, государство переворочӗ унччен кӗҫ, августӑн 14-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче пулмалла пулнӑ, анчах та «техникӑлла» сӑлтавсене пула ӑна тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ. Хаҫат кӑтартса панӑ тӑрӑх, шах Каспий тинӗсӗ хӗрринчи хӑйӗн ҫуртӗнче пулнӑ. Вӑл Тегерана вӑрттӑн пырса ситнӗ пулать, анчах унӑн хӑйӗн килне каялла тухса каймалла пулнӑ.

Асӑннӑ хаҫат Америка генералне Шварцкопфа (вӑл Иранри жандармери начальникӗ пулнӑ, икӗ эрне каярах Иран шахӗ патне пырса кайнӑ) ҫак кавара организаторӗ пулса тӑрать тесе татӑклӑн айӑпланӑ.

ЛОНДОН, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Багдадран ҫапла пӗлтерет:

Иран шахӗ августӑн 16-мӗшӗнче самолетпа Багдада пырса ҫитнӗ. Унпа пӗрле арӑмӗ тата тепӗр икӗ ҫын пынӑ.

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Тегеранран пӗлтернӗ тӑрӑх, Иранри ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Фатеми августӑн 15-мӗшӗнче пулса иртнӗ ӗҫсем пирки хаҫат представителӗсене ҫапла пӗлтернӗ: «Ҫак кавара хатӗрленнине «Иран шахӗ» пӗлмесӗр тӑнӑ тесе калама ҫук».

ТЕГЕРАН, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Иранри радио Иран правительствин заявленине пӗлтернӗ. Унта ҫапла каланӑ: августӑн 15-мӗшӗпе 16-мӗшӗ хушшинче каварҫӑсен ушкӑнӗ, Насыри полковник ертсе пыракан шах гвардийӗн подразделенийӗпе усӑ курса, государство переворочӗ тума хӑтланнӑ. Шах гвардийӗн хӗҫпӑшаллӑ салтакӗсем ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрне Фатемие, ҫул-йӗрпе ҫыхӑну министрне Хакшенаса тата халӗ салатса янӑ меджлис депутатне инженер Зирак-Задене арестлесе Саадабад двореҫне илсе кайнӑ. Кунсӑр пуҫне каварҫӑсем Иран ҫарӗн генеральнӑй штабӗн начальникне арестлеме хӑтланнӑ. Ҫак тӗллевпе вӗсем унӑн хваттерне пынӑ. Анчах ҫак самантра вӑл генеральнӑй штаб ҫуртӗнче пулнӑ.

Насыри полковник хӗҫпӑшаллӑ салтаксем лартнӑ тӑватӑ грузовой автомашинӑпа, виҫӗ «виллиспа» тата пӗр броневикпа премьер-министр Мосаддык ҫуртӗ патне ӑна арестлес тесе пынӑ. Анчах унта Мосаддык ҫуртӗ умне кӑларса тӑратнӑ хурал ӑна хӑйне арестленӗ.

Каварҫӑсем генеральнӑй штабпа Багершах гарнизонӗ хушшинчи телефон ҫыхӑнӑвне татнӑ. Багершахра каварҫӑсем генеральнӑй штаб начальникӗн заместительне арестленӗ. Хулари ытти вырӑнсем хушшинчи телефон ҫыхӑнӑвне те татнӑ.

Малалла пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: августӑн 16-мӗшӗнче ирхине 5 сехетре каварҫӑсене арестленӗ, вӗсем тытса чарнӑ ҫынсене ирӗке кӑларнӑ.

Тегеранри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Иран влаҫӗсем двор министрӗн ӗҫӗсене туса пыракан Аминие тата шах килӗнчи Бехбуди ятлӑ тепӗр ҫынна арестленӗ.

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Тегеранран ҫапла пӗлтерет:

Тегеранри тата Шимранри тӗрлӗ двореҫсене вырнаҫса тӑнӑ шах гвардийӗн мӗнпур подразделенийӗсене августӑн 16-мӗшӗнче ирхине Тегеран гарнизонӗнчи ҫарсемпе улӑштарнӑ. Аббас Абд казарминчи хӗҫпӑшал склачӗсене йышӑнса илнӗ ҫарсене те Тегеран гарнизонӗнчи ҫарсемпе улӑштарнӑ.

ПАРИЖ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Тегеранра пысӑк демонстрацисем пулса иртеҫҫӗ. Демонстрацие хутшӑнакансем: «Шах тӗп пултӑр!» «Каварҫӑсен йӑвине—шах килне пӗтерес пулать!» тесе лозунгсем калаҫҫӗ. Демонстрантсем «ют ҫӗршыв агенчӗсене» ылханаҫҫӗ.

Радио пӗр ҫылтӑм парти пӗлтернине парать. Унта кавар организаторӗ Америка генералӗ Шварцкопф пулни ҫинчен каланӑ. Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, унта Шварцкопфа айӑпласа ҫырнӑ. Вӑл «Иран халӑхне хирӗҫ кавар организацилес тӗллевпе шах килӗнчи представительсемпе пӗрле тӗрлӗ хирӗҫӳсем кӑларма Ирана пынӑ», тенӗ.

ИРАН МЕДЖЛИСНЕ САЛАТСА ЯНӐ

ТЕГЕРАН, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Тегеранри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Иран премьер-министрӗ Мосаддык 17-мӗш созыври меджлиса салатса яни ҫинчен пӗлтернӗ.

Грецире ҫӗр чӗтрени

АФИНЫ, августӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Августӑн 12-мӗшӗнче тата 13-мӗшӗнче ҫӗр чӗтренӗ вырӑнсенче 28 хутчен ҫӗр кисренсе илнине палӑртнӑ. Ҫӗр чӗтренинчен уйрӑмах Кефалони, Закинф тата Итака утравӗсем пысӑк сиен курнӑ. Ҫак утравсем ҫинче пӗтӗмпе 121 пин ҫын пурӑнать. Утравсем ҫинчи хуласемпе ялсем пурте ишӗлсе пӗтнӗ.

Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх ҫӗр чӗтренипе пулнӑ сиен 6 триллион драхма чухлӗ шутланать.

Аманнисене турттарса кӑларма тата сиен курнӑ халӑха пулӑшма пӑрахутсемпе тата самолетсемпе усӑ кураҫҫӗ. Греци правительстви хӑйӗн ют ҫӗршывсенчи дипломати представителӗсене тивӗҫлӗ ҫӗршывсен халӑхне ҫӗр чӗтренипе пулнӑ сиенӗн пысӑкӑшӗ ҫинчен пӗлтерме хушнӑ.

ЛОНДОН, августӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио Афинӑран ҫапла пӗлтерет: августӑн 14-мӗшӗнче ҫӗрле тата ирхине Ионически тинӗс утравӗсем ҫинче ҫӗр татах 11 хутчен кисренсе илнине палӑртнӑ. Ҫӗр чӗтрени халӗ малтанхи пек вӑйлӑ мар, сиен сахал кӳрет. Тинӗс лӑпланса пырать. Ҫакӑ вӑл халӑха пулӑшу парас ӗҫе ҫӑмӑллатать.

АФИНЫ, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Августӑн 14-мӗшӗнче тата иртнӗ каҫ Пелопоннесӑн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ ҫыранӗсенче тата Ионически тинӗсӗн утравӗсем ҫинче каллех ҫӗр чӗтренӗ, ҫакна пула ҫуртсем ҫӗнӗрен ишӗлнӗ.

Ҫӗр чӗтренинчен сиен курнӑ халӑха утравсем ҫинчен тухса кайма чарнӑ. Чирлӗ тата аманнӑ ҫынсене кӑна пӑрахутсемпе Патры хулине илсе каяҫҫӗ.

Утравсем ҫинчи халӑх апат-ҫимӗҫ тата шыв ҫитменнипе пысӑк хӗн курать.

Кефалони тата Закинф утравӗсем ҫинче политика ӗҫӗсем пирки тӗрмере ларакансем вилсе пӗтни ҫинчен

СОФИЯ, августӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви ҫапла пӗлтерет: Эллас Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Кефалони утравӗ ҫинче ҫӗр чӗтренӗ вӑхӑтра вилсе пӗтнисем хушшинче Аргостолион хулинче политика ӗҫӗсем пирки тӗрмере ларнӑ ҫынсем нумай.

Тӗрмере ларакансем хӑйсене тӗрмерен кӑларма ыйтнӑ пулсан та, вӗсене влаҫсем тӗрме ҫуртӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ишӗлсе аничченех тӗрмере тытса тӑнӑ.

Закинф утравӗ ҫинче ҫӗр чӗтренӗ вӑхӑтра политика ӗҫӗсем пирки тӗрмере ларакансем 200 ҫын ытла пӗтнӗ.

СССР халӑх хуҫалӑхне юсаса малалла аталантармалли тӑваттӑмӗш государственнӑй заем

8-мӗш вылявра выигрышсем тухнине кӑтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 ҫулхи августӑн 9-мӗшӗнче Архангельск хулинче пулнӑ.

Таблицӑра 100 тенкӗлӗх облигацисем ҫине выигрышсем тухнине кӑтартнӑ. Выигрыш суммине выляса илнӗ облигаци хакӗ те кӗрет.

Заемӑн мӗнпур разрячӗсенчи ҫак серисемпе облигацисен номерӗсем ҫине выигрыш тухнӑ:

Сери №№	Облигаци №№	Миҫе тенкӗ	Сери №№	Облигаци №№	Миҫе тенкӗ
060062	39*)	1.000	070670	10*)	1.000
060106	1—50	500	070677	47*)	1.000
060307	29*)	5.000	070683	47*)	1.000
060653	38*)	1.000	070797	1—50	200
060667	36*)	1.000	070809	1—50	500
060744	47*)	1.000	070958	04*)	1.000
060759	1—50	500	071095	44*)	1.000
060813	1—50	500	071164	42*)	1.000
060911	36*)	5.000	071210	33*)	1.000
061075	04*)	1.000	071261	26*)	1.000
061225	14*)	5.000	071323	05*)	1.000
061349	36*)	1.000	071361	20*)	1.000
061644	01*)	1.000	071680	16*)	1.000
061660	1—50	200	071756	1—50	200
061847	35*)	1.000	071976	04*)	1.000
062056	20*)	5.000	072112	06*)	1.000
062158	34*)	1.000	072124	19*)	1.000
062206	14*)	5.000	072129	39*)	25.000
062292	1—50	500	072147	08*)	1.000
062328	44*)	5.000	072328	1—50	500
062377	1—50	500	072334	1—50	200
062379	15*)	1.000	072750	48*)	1.000
062917	19*)	5.000	072917	22*)	1.000
063072	1—50	200	072931	1—50	200
063172	11*)	1.000	073492	40*)	1.000
063355	1—50	200	073518	16*)	1.000
063365	1—50	500	073739	1—50	500
063468	1—50	200	073917	44*)	1.000
063518	06*)	1.000	073955	1—50	200
063566	45*)	1.000	074228	25*)	1.000
063747	1—50	200	074246	1—50	200
063851	37*)	25.000	074407	08*)	1.000
064198	1—50	200	074428	23*)	1.000
064366	35*)	1.000	074553	07*)	1.000
064440	12*)	1.000	074600	1—50	200
064946	1—50	500	074705	37*)	1.000
065090	01*)	5.000	074733	41*)	1.000
065115	36*)	1.000	074872	32*)	1.000
065141	12*)	1.000	074898	1—50	200
065221	28*)	1.000	075118	16*)	1.000
065356	1—50	200	075354	34*)	1.000
065388	1—50	200	075373	38*)	10.000
065521	1—50	200	075828	1—50	500
065553	1—50	200	076101	48*)	1.000
065647	1—50	200	076268	17*)	1.000
065697	12*)	1.000	076274	1—50	500
065831	12*)	1.000	076309	47*)	1.000
066092	36*)	1.000	076430	1—50	200
066132	36*)	1.000	076434	30*)	1.000
066182	1—50	200	076690	1—50	200
066330	26*)	1.000	076697	1—50	200
066793	1—50	200	076698	1—50	200
066897	11*)	1.000	076742	36*)	5.000
066943	25*)	1.000	076880	06*)	1.000
066952	17*)	1.000	076887	46*)	1.000
067060	50*)	1.000	077118	23*)	1.000
067118	39*)	1.000	077188	1—50	500
067220	41*)	1.000	077481	24*)	1.000
067292	20*)	1.000	077641	1—50	500
067293	01*)	10.000	077742	39*)	5.000
067396	1—50	500	077854	16*)	10.000
067601	1—50	200	077869	06*)	50.000
067622	31*)	1.000	078293	20*)	1.000
067829	1—50	500	078362	45*)	1.000
067980	38*)	1.000	078411	1—50	200
068082	12*)	1.000	078442	45*)	1.000
068229	05*)	1.000	078524	18*)	1.000
068282	35*)	1.000	078619	1—50	500
068380	25*)	1.000	078653	43*)	1.000
068462	08*)	1.000	078706	05*)	1.000
068596	1—50	200	078728	41*)	1.000
068677	1—50	200	078739	48*)	1.000
068730	1—50	500	078855	1—50	200
068839	1—50	200	078945	49*)	1.000
068853	31*)	1.000	079074	36*)	1.000
069115	26—50	200	079100	36*)	1.000
069321	28*)	10.000	079179	15*)	1.000
069334	1—50	200	079260	1—50	200
069575	27*)	1.000	079268	1—50	200
069670	35*)	1.000	079350	22*)	1.000
069704	27*)	1.000	079487	32*)	10.000
070077	48*)	1.000	079581	32*)	1.000
070225	16*)	1.000	079621	1—50	500
070264	49*)	1.000	079705	25*)	1.000
070282	20*)	1.000	079717	1—50	500
070286	01*)	1.000	079853	03*)	1.000
070556	49*)	1.000			

*) Ҫак серие кӗрекен облигацисен ытти 49 номерӗ 200-шер тенкӗ выляса илнӗ.

ЧӐВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧӖН УПРАВЛЕНИЙӖ.

КИНО

«РОДИНА»—августӑн 18-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеанссенче «Свинарка и пастух», ытти сеанссенче — «Варвары»; 16 тата 20 сехетре—пӗррӗмӗш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуҫланакан сеанссенче — иккӗмӗш сери.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-09, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—6-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 09318 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.